Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

Ăслăлăх доклачĕсем
8-мĕш кăларăм

**Н.Г. Ильина**

# ЧĂВАШ ЛИРИКИ (1960−1990 çулсем): сăвва тишкерес ыйту тата стиль шыравĕсем

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн 2012 çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетекен ăслăлăх сессийĕн доклачĕ*

Шупашкар − 2012

**УДК 821.512.111.0**
**ББК 83.3(2Рос=Чув)**
**И 46**

**Ильина Н.Г.**
**Чăваш лирики (1960−1990 çулсем): сăвва тишкерес ыйту тата стиль шыравĕсем.** − Шупашкар, 2012. 40 с. − (Ăслăлăх доклачĕсем / Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ; 8-мĕш кăларăм).

Ку ĕçре сăвва тишкерес ыйтăва хускатнă, чăваш критикĕсен статйисене хак панă. 1960−1990 çç. чăваш лирикинчи унччен çителĕклĕ е пачах тĕпчемен авторсен вырăнне палăртма тăрăшнă, вĕсен никампа пăтрашмаслăхне, çав вăхăтрах пĕрлештерекен енĕсене, наци хăй евĕрлĕхне йĕрлесе тухнă. Лирика геройĕсен трагедийĕн сăлтавĕсене çĕнĕлле ăнлантарнă.

© Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2012

## КӲРТӖМ

Лирика хайлавӗ вӑл – ҫыннӑн шалти пӑшӑрханӑвӗн, чунчӗм пурнӑҫӗн ӳкерчӗкӗ. Вулакан сӑвӑпа паллашса тепӗр ҫыннӑн кӑмӑлне, шалти вӑрттӑн хусканӑвӗсене лайӑхрах туйма-ӑнланма, ӑна шелleме вӗренет, хӑйӗн утӑмӗсене кӑмӑл-сипет виҫисемпе танлаштарса тӗрӗс хак пама пултарать. Ҫавӑнпа та паянхи кун – ҫӗр чӑмӑрӗ, курайманлӑхпа тулса ҫитнӗскер, кӗҫ-вӗҫ сирпӗнсе каяс пек чӗтренсе тӑнӑ вӑхӑтра – лирика патне таврӑнни, вулакана сӑвӑ тӗнчин вӑрттӑнлӑхӗсене уҫса пама тӑрӑшни уйрӑмах пӗлтерӗшлӗ.

Юлашки ҫулсенче ХХ ӗм. иккӗмӗш ҫурринчи чӑваш поэзине тишкерсе ҫырнӑ самай сулӑмлӑ ӗҫсем пулчӗҫ[1] . Апла пулин те чӑваш лирикин пӗтӗмӗшле ӳкерчӗкӗ калӑплансах ҫитнӗ теме ҫук-ха. Уйрӑмах юлашки аллӑҫуллӑха илес пулсассӑн, ҫителӗклӗ (е пачах) тӗпчемен ятсем пур: П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил, П. Яккусен, М. Сунтал, Г. Федоров, Н. Сельверстрова, М. Карягина т.ыт.те.

Филологи ӑслӑлӑхӗсен ретӗнче стиль шыравӗсемпе сулӑмсене тупса палӑртасси, вӗсене тӗпчесси пысӑк ыйтусенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл поэзин художествӑлла тӗрлӗ енлӗхне уҫса пама, тӑван литература аталанӑвӗн пӗтӗмӗшле ӳкерчӗкне калӑплама питӗ кирлӗ. Эппин, тин кӑна асӑннӑ сӑвӑҫсен вырӑнне, тӗп туртӑмсемпе сулӑмсене палӑртмасӑр хамӑр поэзин тӗрӗс те тулли сӑн-сӑпачӗ пур тесе калама пултараймӑпӑр. Ҫавӑнпа та ку кӗнекере ҫак поэтсен никампа пӑтрашмаслӑхне, ҫав вӑхӑтрах вӗсене пӗрлештерекен енӗсене, наци хӑй евӗрлӗхне йӗрлесе тухма тӗллев лартнӑ.

Сӑвӑ текстне вуласа унти шухӑш-туйӑмсене ӑнланасси, пӗр енчен, питех те ансат пек. Анчах та куҫа курӑнсах кайман вӑрттӑнлӑхсем кунта сахал мар. Лирика хайлавӗсенчи сӑнарсем нумай енлӗ пулни, кашни сӑмахӑн палӑрмалла йывӑрӑшӗ пурри, ҫыру чӗлхи питӗ туйӑмлӑ (шухӑшлӑ та) пулни ҫак литература тӗсне методика тӗлӗшӗнчен тӗпчессине питӗ йывӑрлатать.

Ҫавӑнпа та ӗҫе ҫырнӑ чух сумлӑ литературоведсен – М.М. Бахтин, Л.Я. Гинзбург, В.М. Жирмунский, А.Б. Есин, В.В. Кожинов, В.Г. Родионов, Л.И. Тимофеев, В.В. Федоров, В.Е. Хализев, Б.М. Эйхенбаум т.ыт. – ӗҫӗсем ҫине таянтӑмӑр.

# I. ПОЭЗИЕ ТĔПЧЕС ЫЙТУ

## 1.1. *Сăвă тишкерĕвĕн меслечĕсем*

«Поэзие тĕпчес ыйтăва пирĕн ăслăлăхра ку таранччен çителĕксĕр тишкернĕ тесен те йăнăшах пулмĕ. Тĕрĕссипе каласан, хальлĕхе пирĕн сăвва (поэзие) тишкермелли еплерех мелсем пурри çинчен сăмах хускатса калаçни те курăнмарĕ-ха. Эпир поэзие чуххăмăн, кам мĕнле пĕлет, çавăн пек тишкеретпĕр. Паллах, çавăн пек калани пурин те пĕр евĕр тĕпчемелле тенине пĕлтермест. Сăмах кунта тĕпчеври туйăм-сисĕме, интуицие наука тĕпчев мелĕпе çураçтарасси е тĕрĕслесси çинчен пырать»[2]. Литература пĕлĕвĕнче сăвăç тĕнчине тишкермелли, çав тĕнчене кĕрсе шухăш тупсăмне уçмалли меслетсем сахал мар. Çавăн чухлĕ тĕрлĕ меслетлĕхре камăн концепцине тĕпчев никĕсне хумаллаши, хăш çулĕ сăвăç пултарулăхне туллинрех, тĕрĕсрех хаклама май парĕ? Эппин, хăш-пĕр меслетсен тĕшшине ăнкарса илни кирлех-тĕр.

**Форма меслетне** («формальный метод») энциклопеди словарĕнче çакнашкал ăнлантарнă: «Теоретическая концепция, утверждающая взгляд на художественную форму как категорию, определяющую специфику литературы и способную к саморазвитию»[3]. Çак шкулăн меслетне тĕпе хуракансем (В.В. Виноградов, В.М. Жирмунский, Ю.Н. Тынянов, Б.М. Эйхенбаум, Б.В. Томашевский т.ыт.те) унччен тĕпчемен ыйтусене хускатса сахал мар тарăн ĕçсем çырнă. Вĕсен ĕçĕсем литература пĕлĕвĕн аталанăвĕнче пĕлтерĕшлĕ тапхăр пулса тăраççĕ. Анчах, пурне те паллă, çак меслете тĕпе хуракансем содержанипе форма дуализмне çĕнтерсех пĕтерейменҫ. Вĕсен концепцийĕ, тĕпрен илсен, формалистлах юлнă. Сăмахран, Б.В. Томашевский сăвăлла хайлавра содержани пур, анчах вăл илемлĕх тулашĕнче тăракан пайрăм тесе шутланă[4]. В.В. Кожинов шухăшĕпе, чăн-чăн поэзи содержанийĕ формăран маларахниепле те çуралма пултараймасть, вăл унпа пĕр харăс çуралать, унпа пĕрле çеç пулма пултарать[5].

Мускав лингвистика кружокĕн членĕсен ĕçĕсем тепĕр ăслăлăх шкулĕн – **структура шкулĕн** – никĕсĕ пулса тăнă. 1950 çç. вĕçĕнче совет тĕпчевçисенчен хăшĕ-пĕри литература пĕлĕвĕнчи çак сулăма хапăлласах йышăннă, вĕсемшĕн вăл пĕртен-пĕр тухăçлă меслет пек туйăннă. Структуралистсем сăвă чĕлхин тĕрлĕ «шайĕсене» (фонологи, грамматика т.ыт.те) тишкернĕ – «содержани», «форма» текен ăнлавсене хĕссе кăларса «шайсем» пирки анчах калаçасшăн пулнă. Ку енĕпе уйрăмах Ю.М. Лотман палăрнă. Çак тĕпчевçĕ концепцийĕпе килĕшӳллĕн, текста «шай» урлă çеç тишкерме пулать иккен[6].

Ку меслете Б.П. Гончаров тĕрĕсех критикленĕ пек туйăнать. «Чăннипех хайлавра пĕтĕмпех программăланă-ши, – тет вăл, – сасăсем хăй хальлĕн çеç пулаймаççĕ. Вĕсем пĕрлешсе сăмах тăваççĕ, сăмахсенчен ăсласа тунă пуплев йĕркеленет, содержани пулать. Чĕлхе ăслăлăхĕнче хытă-çемçе е уçă-хупă сасăсене хире-хирĕç тăратса танлаштарни, тĕпчени çыпăçуллă та вырăнлă. Анчах ку принцип литература пĕлĕвĕнче епле ĕçлет-ши», – тесе çырать[7].

«Сăвăлла хайлавăн пĕрпĕтĕмĕшле илемлĕх тытăмĕ арканман чухне çеç ăслăлăх тĕпчевĕ пирки калаçмалла», – тесе çирĕплетет Н.К. Гей. Унăн шухăшĕпе, илемлĕ содержанин тытăмне кăна тĕпчени çителĕксĕр, мĕншĕн тесен хайлав содержанийĕ, унăн илемлĕх системи сăмахран çӳлерех. Ăслăлăх тĕпчевĕн тĕрлĕ меслечĕсемпе мелĕсене пăхса тухнă чухне çакна яланах шута илмелле. Ӳнер произведенийĕ пĕрхальлĕ, пайланман-ванланман чухне çеç пурăнать[8].

Структуралистсем сĕнекен «шай» меслетне эпир те хапăлласах каймастпăр. Сăвăлла хайлава истори, социаллă экономика, философи ыйтăвĕсене уçса панă чухне пулăшу материалĕ пек усă курмалла, йăла-йĕрке пирки калаçнă чухне пĕлӳлĕхсен çăлкуçĕ вырăнне йышăнмалла тени тĕрĕсех пулнăн туйăнмасть[9].

В.В. Федоров тĕпчевçĕ пачах хирĕçле шухăш калать (унпа туллин килĕшетпĕр). «Поэзи тĕнчи, – тет вăл, – чăн пурнăçрипе тӳр килмест. Унтан та ытла, поэзи тĕнчин хăйĕн саккунĕсем. <...> Пĕр-пĕр текст хăйĕн илемлĕх задачине пурнăçлатăр тесессĕн, унăн кăмăл-сипет, философи, юридици тата ытти функцийĕсем пулмасан та пултараççĕ»[10].

Литература пĕлĕвĕнче **микросемантика** тишкерĕвĕн тĕрлĕ тĕсĕсем пур: лингвистика поэтики («лингвистическая поэти-

ка»), анаграмма меслечӗ («анаграммирование»), стилостатистика, сасӑ символизмӗ («звуковой символизм») т.ыт.те. Сӑвӑç пултарулӑхне тӗпченӗ чухне мӗнле пулӑшма пултараççӗ-ши вӗсем? Сӑмахран, **сасӑ символизмне** илер. Ку меслетпе сӑвва тӗпченӗ чухне пуплеври кашни пайрӑма харкам пӗлтерӗш пама тӑрӑшаççӗ. **Анаграмма меслечӗ** сасӑ символизмне çывӑх: сӑвӑлла хайлавран уйрӑм грамматика категорийӗсене «кӑларса илсе» çав категорисене каллех уйрӑм пӑхаççӗ – пӗр сӑмаха сӑввӑн пӗтӗмӗшле сасӑ йӗрки пӑхӑнса тӑрать-мӗн. Çавӑн пекех **фонологи поэзийӗ** («поэзия фонологии»), **виçе поэзийӗ** («поэзия размера») ятлӑ сӑвӑ тишкерӗвӗн меслечӗсем те пур. Анчах кунта микросемантика тишкерӗвӗн пур тӗсӗ пирки те каласа, ӑнлантарса тӑни кирлех мар пулӗ. Вӗсен пурин те пӗр çитменлӗх палӑрать: сӑвӑлла хайлавӑн пӗрлӗхне куçран çухатаççӗ.

М.Г. Гаспаров «Семантический ореол метра: к семантике русского трехстопного ямба» ятлӑ статйинче метрӑн семантикипе сӑмах тӗшшине тупни хушшинче пӗрпеклӗх курать[11]. Çак тӗпчевçех тепӗр статьяра текста тишкерме каллех **«шай» меслетне** сӗнет. Анчах ку «шайсем» Ю.М. Лотманӑн «иерархи шайӗсенчен» уйрӑларах тӑраççӗ. Илемлӗ хайлава йӑлана кӗнӗ пек уйӑрса пӑхакан чӗлхе шайӗсем («традиционно выделяемые языковые уровни») витерсе тӑраççӗ-мӗн. Ю.М. Лотманӑн «шайӗсем» пӗри теприне çирӗп пӑхӑнса тӑратчӗç пулсассӑн, М.Г. Гаспаровӑн «шайӗсем» черетленеççӗ, ылмашӑнаççӗ, пӗр тӗвӗ тӑваççӗ – текстӑн шухӑш пӗрлӗхне йӗркелеççӗ имӗш[12]. М.Г. Гаспаров А. Пушкинӑн «Снова тучи надо мною...» сӑввинчен япала ячӗсене, паллӑ ячӗсене, ӗç-хӗлсене çырса илет, самай кӑсӑклӑ пӗтӗмлетӳсем тӑвать. Анчах ку меслет поэтсен тӗнчине туллин, пур енлӗн уçма пулӑшаймасть: ытла та кансӗр, пӑтрашуллӑ. Тата А. Пушкинӑн сӑввине мар, А. Фетӑн «Шепот, робкое дыханье...» хайлавне (кунта пӗр ӗç-хӗл те çук) тишкерӳ тума сӗнсен мӗн калама пултарӗччӗ тӗпчевçӗ.

Сӑвӑ çемми (ритм) поэзи пӗрпӗтӗмӗшлӗхӗнче çеç хӑй пӗлтерӗшне тупни пуриншӗн те паллӑ. Çавӑнпа та кунашкал танлаштару вырӑнсӑртарах. «Сӑвӑ çемми, – тесе çырать Л.И. Тимофеев, – лексикӑпа, унӑн интонаци тата синтаксис тытӑмӗпе, кӑмӑл-туйӑмпа тата семантикӑпа çав тери тачӑ çыхӑннӑ. Çак курӑмлӑ пӗрлӗхре çеç сӑвӑ ритмӗ поэт суйласа илнӗ пӗтӗмӗшле пуплев юхӑмӗпе килӗшӳллӗ индивидуаллӑ характер йышӑнать»[13].

Т.Г. Мальчукова **танлаштарупа типологи** меслетне кӑмӑллать[14]. Чӑннипех, сӑвӑлла хайлавӑн тулаш ҫыхӑнӑвӗсене шалти тытӑмпа пӗрлештерсе тӗпченӗ чухне ку меслет кирлӗ, вӑл «хушма вӑчӑра» пулать те. Анчах лириксен тӗнчине уҫнӑ ҫӗрте авторӑн биографийӗнчи лару-тӑру, самантӑшсен хаклавӗ т.ыт.те шутсӑр пӗлтерӗшлех мар.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 80-мӗш ҫҫ. литературоведсене **«системный подход»** текен тишкерӳ меслечӗ кӑсӑклантарма пуҫлать. Ку тӗлӗшрен Б.П. Гончаров «Поэтика Маяковского» кӗнеки курӑмлӑ. Вӑл ҫак меслет никӗсӗнче илемлӗ пулӑмсен пӗрлӗхне ӑсласа илнине курать. «Шайсене» системӑсемпе ылмаштарни терминологи вӑййи мар», – тет Б.П. Гончаров[15]. Анчах Д.П.Ильин ӑна тӗрӗсех тиркет.

Структурализм шайӗсене система меслечӗн иерархийӗсемпе («система» тата «система айӗ», «макросистема» тата «микросистема») хирӗҫлетсе тӑратнине йышӑнмасть Д.П. Ильин. Структура элеменчӗсене микросӑнарпа микросӑнарсен комплексне хире-хирӗҫлетни пирки те тавлашмалӑх пур, ун шухӑшӗпе. Пӗр сӑмахпа каласассӑн: ҫак тӗпчевҫӗ «илемлӗхпе эстетика чӑнлӑхне» (поэзи тӗнчине) сӑнарлӑхпа литература системи пек ҫеҫ кӑтартнипе пӗрре те килӗшмест. «Попытки применения системы без структуры есть либо бессистемность по сути, либо структурализм с «черного хода»[16].

Д.П. Ильин мӗн сӗнет-ха? Тӗпчевҫе илемлӗ сӑмах ӑстаҫи (поэт) хӑйӗн туйӑмӗсене вулакан патне мӗнле ҫитернин процесӗ ытларах кӑсӑклантарать[17]. Ильин ӗҫӗ хӑйне май интереслӗ, уйрӑм сӑвва е сӑвӑҫ пултарулӑхне тишкернӗ чухне вырӑнлӑ та. Ҫапах эпир чӑваш лирикин темиҫе вунӑҫуллӑхне пӑхса тухнӑ чух ку меслетпе усӑ курмӑпӑр.

XX ӗм. 90-мӗш ҫҫ. компьютер технологийӗ аталанса кайнӑ майӑн сӑвӑ ҫырма пултаракан кибернетика машинисем шутласа кӑларма пулать текенсем йышланса кайрӗҫ[18].

В.В. Кожинов литературовед шухӑшӗпе (эпир унпа килӗшетпӗр), ҫакнашкал ӗнентернисем этемӗн чун суккӑрлӑхӗпе ҫыхӑннӑ. «Ҫапла шутлакансем, – тесе ҫырать вӑл, – сӑвӑ ҫырас пултарулӑхӑн чӑн пӗлтерӗшне ӑнланмаҫҫӗ (е ӑнланмана переҫҫӗ). <...> Паянах пӗр иккӗленмесӗрех калама пулать – чи чаплӑ машина та нихӑҫан та чӑн-чӑн сӑвӑ ҫыраймӗ. Мӗншӗн тесессӗн поэзире ҫын илемӗ пытаранннӑ, унта этем чунӗ тата уйрӑм ҫын шӑпи пур»[19].

В.В. Кожинов ӗҫӗ пуринчен те ӗнентерӳллӗрех, меллӗрех пек пирӗншӗн, мӗншӗн тесен пӗр-пӗр сăвăҫ пултарулăхне тарăн та нумай енлӗн уҫма, объективлă пӗтӗмлетӳсем тума ку чухне майсем ытларах. Ҫак тӗпчевҫӗ теорире каланине курăмлă тӗслӗхсемпе ҫирӗплетет. Сăмахран, «Стихи и поэзия» кӗнекере сăввăн содержанипе форми уйрăлми ҫыхăнура пулни пирки пӗрре мар калать. «Мельчайшее изменение формы означает изменение содержания, смысла. И наоборот: каждый нюанс смысла неизбежно осуществлен, реализован в форме. <...> Работа над содержанием есть в то же время работа над формой, и наоборот. Поэт не творит и не может творить форму и содержание «по отдельности». Он создает произведение, в котором содержание и форма – это две стороны одного единого целого»[20].

Литература пӗлӗвӗнче кунашкал курăм В.В. Кожиновччен пулман мар. Икҫӗр ҫул каяллах Н. Карамзин ҫакна ҫывăх шухăш каланă[21]. М.М. Бахтин та содержанипе форма пӗр-пӗринпе ҫыхăнни, анчах эстетика тишкерӗвӗ тунă чух вӗсене уйăрса пăхмалли пирки ҫырнă[22].

Юлашки ӗмӗр ҫурă хушшинче кашни сăвă тӗпчевҫишӗн тишкерӳ тунă чухне содержанипе формăна уйăрса пăхасси малти вырăнта тăрать. «содержани» тата «форма» – эпир шутласа кăларнă абстракцисем ҫеҫ. «Тишкерӗвӗн малтанхи тапхăрӗнче содержанипе формăна уйăрса пăхни вырăнлă та, кирлӗ те, анчах юлашкинчен синтез тумалла»[23].

В.Г. Родионов та ҫак шухăшах калать: «Юлашкинчен, мел суйласа илнӗ тата хайлавăн тытăмне тишкернӗ хыҫҫăн, синтез тумалла. Ҫакă вара хайлава каллех пӗтӗмӗшле, анчах та уйрăм детальсене пӗлсе пуянлатнă хыҫҫăн курма май парать»[24]. Ҫак концепцин тымарӗсем Гегель «Эстетики» таранах тăсăлаҫҫӗ: ăсчах тишкерӳ пуҫламăшӗнче содержанипе формăна уйрăмшар пăхма, кайран синтез тума сӗннӗ[25].

Ҫапла вара тӗпчев меслечӗсем ăслăлăхра нумай. Пирӗншӗн чи тухăҫли – Л.И. Тимофеев, М.М. Бахтин, В.В. Кожинов, В.Г. Родионов ӗҫ меслечӗ. Анчах тишкерӗве пуҫăниччен кашни тӗпчевҫӗн тата мӗне асра тытмалла-ха?

## 1.2. *Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхне ăслăлăхра хак пани*

Поэзи тĕнчи вăл – тĕпчев ирттермелли харкам ăнлав. Ăслăлăх ăнлавĕ поэзи тĕнчинчен çуралса тухмалла. Урăхла каласан, çав тĕнчери саккунсем тишкерÿçĕн пурнăç опычĕпе, тĕнчекурăмĕпе тÿр килмесен те литература хайлавĕнчи саккунсене пăхăнмаллах[26]. Чи малти вырăнта хак парасси мар, ăнланасси пултăр. Çавăн чухне çеç çыравçă критике хисеплĕ, унăн шухăшне картма пуçлĕ[27].

Тĕпчевре çакă çав тери пĕлтерĕшлĕ самант. Ма тесессĕн пурне те паллă: пирĕн çĕр-шывра сахал мар вăхăт хушши «тÿнтер социологизм» («вульгарный социологизм») пуç пулса тăнă. 1920 çç. вĕçĕнче, уйрăмах 1930 çç., çыравçăсен Октябрьти революци, тăван парти, коммунизм, халăх тăшманĕсем пирки çырмалла пулнă. Анчах вăл çулсенче наци туйăмĕ вăйланма пуçланăран тăван халăх историйĕ патне таврăнакансем, чăваш малашлăхĕшĕн пăшăрханакансем, «пулхăр халавĕшĕн» тунсăхлакансем те пулман мар. Тĕслĕхрен, Митта Ваçлейĕ чăваш «метисланассине», вырăса тухса пĕтессине сиссе чĕрине çунтарса «Сĕрĕмре» сăвă çырнă. Çамрăк Хусанкай та «Тутар поэчĕсене» ятлă сăвăра тăван халăхсен историйĕ пирки шухăшлать.

Çакнашкал шухăш-туйăмсем, «нăйкăшусем» çутă малашлăха утнă чухне, социализм тунă чухне чăрмантаракан çÿп-çап пек курăннă вăл вăхăтри критиксене: «Революцие, Миттапа Хусанкайăм, пулхăрсем туман вĕт. Сотсиалисăма та пулхăрсем тумаççĕ. Чăваш ĕç халăхĕсенчен пăрăнатăр эсĕр! <...> Вĕренес пулать, халăха урлă пăхмалла мар»[28]. «Пит хавшак чĕреллĕ Хусанкай! Кăна вырăсла «çентиментталисăм» теççĕ. «Этем» тесе тăшмана та хĕрхенмелле-и пирĕн?»[29]

Чăваш литература критики иртнĕ ĕмĕрĕн 20–30-мĕш çç. нумай çивĕч ыйтăва татса пама тăрăшнă пулсассăн та, тĕп тĕллевĕ унăн çыравçăсене идеологилле воспитани парасси пулнă. «Вăл вăхăтра, – çырать В.Г. Родионов, – пирĕн критиксенчен чылайăшĕ çамрăк пролетçыравçăсен ретĕнчи çынсем пулнă. Вĕсем ун чухне чăвашсен патриархĕн И.Я. Яковлевăн, унăн шкулĕнчен вĕренсе тухнă прозаиксемпе поэтсен пархатарлă ĕçĕсене сивленĕ. Çак сăлтавсене пула пирĕн критикăпа литература наукинче чи малтан тÿнтер социологизм шкулĕ пуç пулса тăнă. Вырăс критикипе литературоведенийĕнче çав шкула 1932 ç.

сивленӗ, ҫавна май йӑнӑш хак панисене тӳрлетме пултарнӑ. Чӑваш культуринче ҫак ӗҫ (ҫӗнӗлле хак парасси) пурнӑҫланайман»[30]. Сӑлтавне ҫыннисем малтанхисемех юлнинче, вӗсем хӑйсен шухӑшӗсене улӑштарманнинче, вӑл ҫынсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнинче курать В.Г. Родионов. «1937 ҫулхи репресси вӑхӑтӗнче шӑпах тӳнтер социологсем палӑртнӑ «ҫитменлӗхсем» ҫине таянса вуншар ҫыравҫа сӑлтавсӑр айӑпланӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче те тӳнтер социологизм пуҫ пулса тӑнӑ-ха пирӗн. Унӑн тымарӗсем паян кунччен те (статьяна 1988 ҫ. ҫырнӑ. – *Н.И.*) сыхланса юлнӑ» (Ҫавӑнтах).

Чӑннипех те, пӗтӗмӗшле сасӑ иртнӗ ӗмӗрӗн 20–30-мӗш ҫҫ. пекех тиркевлӗ пулмасассӑн та, тӗпчевҫӗ хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне ҫыравҫӑна йышӑнтарма тӑрӑшни 1990 ҫҫ. сисӗнет. Сӑмахран: «Ҫапах та, тунмастӑп, паянхи поэзи кӑмӑла ҫырлахтараймасть. Юлашки темиҫе ҫул хушшинче кӑна пирӗн автономилле республикӑра пысӑк заводсем, Союзӗпе паллӑ предприятисем нумай лартрӗҫ. Шупашкар ГЭСӗ ӗҫе кӳлӗнчӗ. <...> Акӑ чи малтан мӗн ҫинчен ҫырмалла та поэтсен – ваттисен те, ҫамрӑккисен те»[31].

Шел пулин те, ӗҫ паттӑрӗсемпе «хӑватлӑ» социализм пирки ҫыракан сӑвӑҫсене мухтани паллӑ тӗпчевҫӗсен ӗҫӗсенче те курӑнать. Тӗслӗхрен, А.В. Васильев (Васан) «Хавхалану хавалӗ» (1987) кӗнекере парти, Ленин ҫинчен ҫыракан сӑвӑҫсен хайлавӗсене пӗрремӗш рете лартать[32]. Ку кӗнекери тӗпчев пирки, пӗтӗмӗшле каласассӑн, ҫиелтенрех тунӑ тӗпчев теме пулать. Тепӗр статьяра та ҫав ӳкерчӗкех, сӑвӑ тарӑнӑшне кӗни курӑнмасть – П. Эйзин сӑввисене «касать те ваклать»:

« “Январь ҫара уран чупать кӗрт ҫийӗн. Янрать, ялтӑртатать сивӗ...” Янкӑр хӗл сиввине ҫапла сӑнлать поэт. Шел, ҫав ӳкерчӗксенче эпир чылай чухне автор шухӑшне курсах каймастпӑр. Мӗн каласшӑн вӑл, мӗне ырлать? <...> Куҫ умне мӗн лекнине ӳкерсе панипе пӗрлех пирӗн сӑвӑҫ шухӑшне, ун активлӑ позицине те курас килет. Ӑнӑҫсӑр танлаштарусем те пулаҫҫӗ П. Эйзин сӑввисенче: «тӳпе ыйткалакан пек ҫӗтӗк-ҫатӑк», «ҫанталӑк вӑрӑ» т.ыт.те. Хальхи саманара куҫ умне пулнӑ ӳкерчӗксене манӑҫа тухнӑ ӑнлавсемпе («ыйткалакан») ҫыхӑнтарни пачах та вырӑнсӑр»[33].

Куратпӑр, автор кунта сӑвӑсене чӑн пурнӑҫпа танлаштарать. Танлаштарать те, тӳр килӳсем тупаймасть те – Эйзин

сăввисене тиркесе тăкать. Анчах эпир В.В. Федоров каланине асра тытатпăр: чăн-чăн поэзи тĕнчин хăйĕн саккунĕсем, тĕпчевĕн çав тĕнчери саккунсене пăхăнмалла[34]. А.В. Васильев (Васан) чăваш литература пĕлĕвĕнче сумлă вырăнта пулнине хирĕçлеме çук, çапах ку сăвă тишкерĕвĕсем пире тивĕçтермеççĕ.

Унăн сăмахĕсем XX ĕм. пуçламăшĕнче реалист çыравçăсем символистсене вăрçса ӳпкелешнине хытă аса илтереççĕ. Тĕслĕхрен, 1909 ç. «Биржевые ведомости» хаçат редакцине янă çырура автор çамрăк «декадентăн» сăввине (А. Блокăн «Ты так светла, как снег невинный...» пирки сăмах пынă) ăнланманнине пĕлтерет[35]. С. Городецкий 1913 ç. «Аполлон» журналра символизмпа мистикăна хирĕç çырнă хăйĕн манифестĕнче Блока тӳрременĕх вăрçать, çамрăк поэтсене уçăмлăрах çырма чĕнет[36].

Хăш-пĕр чăваш критикĕсем 1970–1980 çç. те çакнашкал шайра шухăшлани тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. П. Эйзин хăй саккунĕсемлĕ хăйĕн тĕнчине калăплать. Мĕн тесе Эйзин тĕнчекурăмĕ Л.М. Волков критикăннипе тӳр килсе шайлашса тăмалла? Асăннă критик «Анне пехилĕ» кĕнекене (ячĕшĕн виç ыр сăмах калать те) айăн та çийĕн хурласа пĕтерет[37]. Л.М. Волков П. Эйзинăн «Пиçен» сăвви çинче уйрăммăн чарăнса тăрать. Эстетикăлла илеме «ял хыçĕнчи çара та пушă вырăнта» ӳсекен йĕплĕ пиçенре курма пултарнишĕн поэтран тăрăхлать: «Сăвва "Епле-ха сурăхсем ку таранччен те çиеймен ăна е урăх выльăх таптаман?" евĕр пĕлтерĕшсĕр сăмахсем кĕрсе кайнă – пиçене сурăх çиме мар, ытти выльăх пекех унран пăрăнса иртсе каять мар-и-ха? Пуш-пушă вырăна илем кӳрсе («пушă илем кӳрсе» теес килет ман) ларакан пиçене идеализацилет сăвăç, çапла тума вара кирлехчĕ-ши?»[38]

Анчах П. Эйзин поэзийĕн тĕп паллисенчен пĕри вăл – ытарлă, символсемпе шухăшлама пултарасси. Ку тĕслĕхре пиçен ахаль ӳсен-тăран çеç мар – лирика субъекчĕ, пуш-пушă та хаяр тĕнчере кĕрешекенскер. Сăвăра вăл – «ял хыçĕнчи çара та пушă вырăн». Ку тĕнчере йăпăлтилĕх, пĕрне-пĕри сутни, икĕпитлĕх, сĕмсĕрлĕх, пуçлăхсене юраслăх хуçаланать. Кунашкал çынсене Эйзин геройĕ сурăхсемпе танлаштарать. Вăл хăйĕн чун тасалăхне упраса хăварассишĕн кĕрешет. Çав пушлăхра пурăнса та чун-чĕрине вараламаннишĕн, хуçăлманнишĕн хăйĕнчен хăй тĕлĕннине куратпăр.

«Пиҫен» ятлă сăвă анчах мар, Эйзинăн нумай хайлавне («Юр», «Музыка», пĕчĕк этюдсем т.ыт.те) символсем витерсе тăраççĕ. Çапла А.П. Хусанкай Эйзин пирки каланă сăмахсем («говорит прямой речью, и слова значат то, что они значат»[39]) пур чухне те тӳрре килмеççĕ. Сăвăç пултарулăхĕнче, халь çеç палăртрăмăр, символсем пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах, шел пулин те, паян кунччен те ку ыйтăва никам та тĕплĕн çутатман.

М.А. Ставский витĕмлĕрех калать: «Пĕр-пĕр çыравçăн пултарулăхри сăн-сăпатне ӳкерме шутласан, кирек хăш критик та, паллах, унччен çавна ыттисем мĕнле тишкернипе интересленет. Ку енчен илсен П. Эйзин пултарулăхне чăваш критикĕсем темшĕн асăрхасах кайман. Мĕн асăрхаканĕ те поэт пултарулăхне вырăсла хакланă. П. Эйзин пултарулăхне хаклама чăваш чĕлхинче тивĕçлĕ сăмах çитсех каймасть тенĕ пулĕ ĕнтĕ. <...> Литература каçалăкĕнче вăтăр çул ытла тар юхтарса чăвашла 7 кĕнеке пичетлесе кăларнă авторшăн ку, паллах, çителĕксĕр, тен, кӳренӳллĕ те-и»[40].

Л. Мартьяновăпа П. Яккусенĕн (П.Я. Яковлев) ячĕсене чăваш критикинче, çителĕклех тĕпчемен пулсан та, пачах асăрхаман теейменĕпĕр. Çав вăхăтрах А. Аттил, Г. Федоров, М. Сунтал, Н. Сельверстрова пирки пĕрер-икшер çĕрте асăнкаласа иртнине кăна куратпăр. М. Карягина поэтикине те, çавăн чухлĕ кĕнеке кăларнă хыççăн, пур енлĕ тĕпчени кирлĕ.

Обзорлă статьясем, паллах, асăннă сăвăçсен пултарулăхне туллин çутатса параймаççĕ. Тата вĕсенче ытларах содержани тĕпчевĕ çеç, сăвă форми пирки калаçни курăнсах каймасть. Нумай чухне поэтăн хăйне евĕрлĕхĕ е çитменлĕхĕ пирки калани сăмах вĕççĕн анчах юлать, тĕслĕх илсе парса ĕнентерни çук.

Акă В.С. Юмарт (Чекушкин) П. Яккусенĕн «Тăм тăвайкки вăййисем» ятлă кĕнекене ырласа йышăнать. Çав вăхăтрах, ыт ахальтен тенĕн (асăрхаттарса хăварма кирлĕрен): «Кĕнекере алла хăнăхтармалла çырнă пек, этюдсемпе эскизсем майлă туйăнакан сăвăсем те çук мар (тĕслĕхсем илсе кăтартмасть. – *Н.И.*). Унăн геройĕ – хальхи совет çынни, шанчăклă, пиçĕ, ăшă кăмăллă, тӳрĕ чунлă этем»[41].

Пачах урăхла, пĕрре пăхсассăнах П. Яккусен лирика геройĕ ун чухнехи «совет çыннинчен» хăйĕн тĕнчетуйăмĕпе, тĕнчекурăмĕпе уйрăлса тăни курăнать. Вăл – романтик, хăй шутласа

кăларнă илем тĕнчинче пурăнать. П. Яккусенĕн çак енне тĕпчесе калăплă ĕç çырни хальлĕхе çук. Çавăн пекех сăвăсенчи «пĕчченлĕх» кĕвви-туйăмĕ еплерех улшăнни пирки, поэзири «вертикальлĕх» пирки те никам та нимĕн те каламан-ха.

Чăваш критикĕсенчен нумайăшĕ XX ĕм. 90-мĕш çç. таранчченех хăйсен шухăш-кăмăлне авторсене йышăнтарасшăн пулни çинчен çӳлерех палăртнăччĕ. А.В. Лукин Любовь Мартьянова сăввисене тишкерсе мĕнле пĕтĕмлетӳ тăвать-ха: «Çапах та, ман шутпа, поэтăн малашне ку формăпа (традицилле формăпа. – *Н.И.*) тăрăшарах ĕçлес кăмăлĕ пулсан, вăл çакна шута илтĕрччĕ: сăвă йĕркисем çирĕпреххĕн кĕвĕленсе пыччăр, рифма хĕмĕ те ялтăрарах тăтăр. <...> Пирĕн паянхи хĕрӳ те кăткăс пурнăçра кĕрешмелли те сахал мар. Апла тăк çакăнта хăватлă сасă, вилĕмсĕр Ç. Мишшин вĕрилĕх витĕмĕ кирлĕ. Темшĕн (именерех тăрать-ши) кун пек сăвăсем курăнсах каймаççĕ Л. Мартьяновăн»[42].

Л. Мартьяновăн та, кашни талантлă çыравçăн пекех, хăйĕн çыру еккийĕ, хăйĕн саккунĕсемлĕ тĕнчи пур. Вăл састашсен туллилĕхĕ, ритмика вылявĕ патне ăнтăлмасть те, ăна ку кирлĕ те мар. Мĕншĕн тесен унăн тĕп тĕллевĕ – *туйăм-шухăша вулакан патне çитересси.* Лирика героини вулаканран хĕрхенӳ мар – *ăнлану кĕтет.* Çавăнпа та Мартьянова калаçăвĕ туртăнса карăнтарнă хĕлĕх пек. Çемĕ «такăнни», кĕскен-кĕскен калани, предложени çур сăмахран татăлни – пĕтĕмпех çак сăлтавпа çыхăннă. Кунта эпир содержанипе форма чăннипех те уйрăлми çыхăннине куратпăр.

Пĕр енлĕрех, тӳнтер социологизмлă статьясен фонĕнче Ю.М. Артемьев, А.П. Хусанкай, В.Г. Родионов, В.С. Чекушкин, М.А. Ставский, В.В. Степанов, С.Н. Сатур ĕçĕсем уйрăлса тăраççĕ. Ку тĕпчевсенче вăл е ку поэтăн уйрăмлăхне, тĕшшине ăнланса илме тăрăшни лайăххах курăнать: «Поэта пĕр-пĕр темăпа çырма ятарласа хистени те, темăран пистерни те вырăнлă мар; ăна хăй кăмăллана темăра хăйĕн тĕнчине уçма сунмалла, пулăшмалла. Унăн хăйĕн кураслăхĕ, куç хывас йӳтĕмĕ»[43].

Халĕ çеç асăннă тĕпчевçĕсен ĕç меслечĕ Л.И. Тимофеев, В.В. Кожинов, В.В. Федоров, Ю. Болдырев, И. Волгин тата ытти вырăс литературовечĕсемпе критикĕсен меслечĕсене аса илтерет. «Критический анализ в идеале должен быть конгениален произведению»[44].

Умĕнрех асăннă статьяра В.Г. Родионов Ю.М. Артемьева литература спецификине шута илекен аналитик-тишкерӳҫĕ тесе палăртать[45]. Профессор шухăшĕпе килĕшмесĕр тăма ҫук. Чăннипех те, анлă тавракурăм, литература спецификине лайăх пĕлни, ҫемҫен асăрхаттарса калама пĕлни Ю.М. Артемьева малти ретри критиксен шутне кĕртме ирĕк парать. Апла пулин те Л. Мартьяновăн «Шăнса кайнă этем хурăна касса ячĕ» сăввине вăл епле тишкерни пире тивĕҫтермест. 1980 ҫ. «Тăван Атăлта» (12 №) Л. Мартьяновăн пичетленнĕ сăвă ярăмне пăхса тухать те хайлавсене якатса ҫитермесĕрех е поэзи картне лартмасăрах пичете сĕннĕ автор пек хаклать. «Ҫапах та темиҫе сăвăра шухăш тăрăлса ҫитейменни е ăна ҫавăрса калама май килтерейменни хытах сарăплать сăвăҫа... Автор шухăш ҫунатне сарса эпика енне туртăнасшăн. Материалĕ ку поэма валли те ҫителĕклĕ пулас, анчах та ăна валли юрăхлă форма тупайман-ха. Ҫавăнпа та поэзи тени те пит сисĕнесшĕнех мар кунта», – тесе вĕҫлет хăй сăмахне сумлă критик[46].

*Шăнса кайнă этем хурăна касса ячĕ. / Унта вырнаҫнăччĕ пăлан, ав, пăрулама. / Тарасшăнччĕ. Пултараймарĕ ҫав. Йăванчĕ... / Халсăрланнă. Ĕлкĕреймерĕ пăрăнма. // Кама кам текен шухăшпа пурнаймастăп, / Ыр кăмăлпах-ҫке хăш чух хур тăван. / ...Хушăран умри кăвайтпала ăшăнаймастăн. / Курăнать куҫ умне ҫав юнланнă пăлан.*

Ҫак сăвăлла хайлавра Ю.М. Артемьев этем йывăҫ-курăкпа чĕрчунсене шелсĕр, тискеррĕн пĕтернине сивлесшĕн пулнине ҫеҫ курать. Ун шухăшĕпе, пăланăн драми-инкекĕ ҫинчен калани кунта пĕр-пĕр калав е экологи проблемиллĕ очерк валли хатĕрленĕ эскиз пек анчах иккен.

Ку хайлавра пачах урăх шухăш пытарăннăн туйăнать пире, ăна «Ыр кăмăлпах-ҫке хăш чух хур тăван» текен пĕр йĕркерех тупма пулать. «Пурнăҫра тем тĕрлĕ те килсе тухать. Тепĕр чух шутламасăрах, усал тĕллевсĕрех ҫынна вилмелле кӳрентерме пулать. Вара ун пек чух ҫитĕнӳ те савăнăҫ кӳреймест («...умри кăвайтпала ăшăнаймастăн. Курăнать куҫ умне ҫав юнланнă пăлан»), чунран айăп туйăмĕ каймасть», – тесшĕн пек туйăнать кунта Мартьянова героини. Вăл ҫапла хăй те сисмесĕрех такама кӳрентерсе курнă пулас.

Ытарлăн, ҫав тери аякран тепĕр шухăш шахвăртни те пур пек: вĕри туйăмсемсĕр шăнса хытнă савнийĕ лирика геро-

ини çумĕнче йăл илнĕ те асăрхамасăр ăна темĕнле питĕ хытă кӳрентерсе хăварнă (тен, унпала пĕрлешсе çемьеллĕ, ачаллă-пăчаллă пулас ĕмĕтне татнă?). Анчах Мартьянова героини тавăрас кăмăлпа пурăнмасть («Кама кам текен шухăшпа пурнаймастăп»). Вăл тата çакна пĕлет: таçта çитсессĕн те, такампа пулсассăн та ăна макăртнине савниййĕ хăй те манаймĕ, «умри кăвайтпала» та ăшăнаймĕ.

Куратпăр, мĕн тĕрлĕ шухăш çуратмасть ку пĕчĕк хайлав. «Эп сана саваттăм, çĕрĕпе çывраймастăм – эс мана пăрахрăн. Чун-чĕрем çунать», – тесе тӳррĕн лаплаттарса хунă пулсассăн: «Поэзи картне ларман, юрăхлă форма тупайман-ха», – теме пултараттăмăр. Л. Мартьянова тĕслĕхĕнче вара шăпах чăн-чăн поэзи калаçать, шалти ырату пирки кунтан ытарлăрах, илемлĕрех, çуттăнрах та витĕмлĕрех калаймăн та. «Тарасшăнччĕ», «пултараймарĕ», «йăванчĕ», «халсăрланнă» сăмахсем хыççăнхи тăхтавсем (паузăсем) хăйсемех мĕн чухлĕ тарăнлăх çуратаççĕ...

Эппин, пĕр-пĕр сăвăçăн чун тăрăмне, унăн тĕнчине ăнланасси сумлă критиксемшĕн те çăмăл ĕç мар. П. Эйзин, Л. Мартьянова, П. Яккусен тата ытти сăвăçсен пултарулăхне шкул программине те кĕртнĕ, анчах вĕсен творчествине çутатакан материалсем çукрах. А.П. Хусанкайăн «Поиск слова» кĕнекине асăнтăмăр. Анчах пĕр-пĕр поэт пултарулăхĕ пирки пĕчĕк çеç кĕнекере 2–4 страница çеç калани хальлĕхе çителĕксĕртерех. Тата ку ĕç хăçан тухнине те манмалла мар – 1987 ç. Унтанпа çирĕм çул ытла иртнĕ: авторсем çĕнĕ сăвăсем хайланă (вăхăтсăр çĕре кĕнĕ А. Аттил пирки, шел пулин те, апла калаймастпăр), çĕнĕ кĕнекесем кăларнă. Çавăнпа уйрăм ятсем çинче чарăнсарах тăма, чăваш лирикине тарăнрах тĕпчеме мехел çитнĕ-тĕр...

# II. ЧĂВАШ СĂВĂÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

## 2.1. *«Сукмакăм ман – тасалăх айĕнче»* (1950–1960 çулсенчи сăвăри çĕнĕлĕхсем тата Петĕр Эйзин пултарулăхĕ)

XX ĕм. 1950–1960 çç. пирĕн çĕршыври литературăра пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Унччен икĕ-виçĕ теçетке çул хушши сăвăсенчи сăнар, тĕпрен илсен, хастар хавалла класс кĕрешӳçи пулнă пулсассăн, 1950 çç. вĕçĕсенчен этемĕн шалти тĕнчипе кăсăкланасси, онтологи ыйтăвĕсене хускатасси вăй илет. Вăл вăхăтра вырăс поэзийĕн тӳпинче Р. Рождественский, Е. Евтушенко, А. Вознесенский, Б. Ахмадулина, Н. Рубцов, тутарсен – Р. Файзуллин, Г. Рахим, пушкăртсен Р. Бикбаев тата ытти сăвăçсен ячĕсем çуталса каяççĕ. Çын чунĕн илемлĕхĕпе тарăнлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Коммунистсен правительстви мĕн сĕннипе килĕшсе çиле майлă шăлса пурăнма мар, юхăма хирĕç ишме, кашнине хăй пек пулма вĕрентнĕ вĕсем вулакана, иксĕлми-кивелми кăмăл-сипет виçисем патне таврăнса чун хушнă пек пурăнма йыхăрнă.

Çакнашкал улшăнусем чăваш литературинче – вырăссенни пекех – чылай малтан, 1950 çç. вĕçĕнче тата 1960 çç. пуçламăшĕнчех палăрнă. Çĕн сывлăш кĕртекенĕ Геннадий Айхи пулни пирки пирĕн критиксемпе литература тĕпчевçисем тавлашсах каймаççĕ. «Началось все с Айги. Для него важной ступенью в творческом развитии было нащупывание путей к самососредоточенному слову, обнажающему глубину и сложность процесса познания современного человека»[47].

Ытти литература тĕсĕсемпе танлаштарсан, сăвăра содержанипе форма уйрăлми тачă çыхăнни пирки маларах çырнăччĕ. Çапла вара чун-чĕре вăрттăн кĕтесĕсем патне «хыпашла-хыпашла» çул шырани сăвăлла хайлавсен кӳлепи çинче палăрмасăр юлма пултарайман. В.Г. Родионов 1950 çç. Айхин çыру ăсталăхĕнче темиçе çĕнĕлĕх тупать: «Акă 1954 çулта Г. Айхи

састашсăр (шурă) сăвăсем çырма пуçăнать. Çавăн йышши сăвăра классикăлла тăвата йĕркеллĕ çавра та тĕл пулмасть», – тет. Малалла тĕпчевçĕ Айхи сăввисенче чăваш поэзийĕнче çав вăхăтчен пулман çемме курать, çак çĕнĕ стиль чи малтан интимлă лирикăра палăрнине асăрхать. «Айхи 1954 çулта хайланă сăввинче тепĕр хăйне евĕрлĕх курăнса каять: поэт йĕркисене яланхилле пысăкран мар, пĕчĕк саспаллисемпе çырса пуçлать. Г. Айхи çавра тăвас ĕçре те ыттисенчен уйрăммăн курăнса тăнă. Акă «Хулари çур кунĕ» (1956) сăвва вăл 2, 7, 8, 15 йĕркеллĕ çаврасем кĕртет, сикчĕсемпе (цезурăсемпе) интонаци тăвас ĕçре ăнăçлă усă курать. 1957 çултан пуçласа Г. Айхи ирĕклĕ сăвăсем те шăратса кăларать («Пĕрремĕш юр каçĕ»)»[48].

Айхи витĕмĕ чăваш поэзийĕнче 50-мĕш çç. вĕçĕнченех палăрма пуçлать иккен. В. Тимаков, М. Сениэль, А. Аттил, П. Эйзин тата ытти çамрăк сăвăçсем Айхилле çырма тăрăшаççĕ, поэзире хăйне евĕрлĕ юхăм пуçласа яраççĕ. «Г. Айхи поэтикинче тĕрлĕ сăвăç тĕрлĕ енсене курнă. Чылайăшĕ классикăлла йĕркесене «картлашкалантарнине», йĕркесене пĕчĕк саспаллипе пуçланине килĕштернĕ. Çаксем çемĕ йĕркеленĕвĕнче пысăк улшăнусемех тума пултарайман ĕнтĕ. Ытти çамрăк сăвăçсен фонĕнче П. Эйзин пултарулăхĕ питех те оригиналлă курăннă. Поэт Айхи хыççăн форма шыравĕсен çулĕ çине тăрса тĕлĕнмелле тĕнчене çитсе кĕнĕ»[49].

Мĕнлерех «тĕлĕнмелле тĕнче-ши» вăл? Вăл вăхăтри сăвăçсенчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха П. Эйзин пултарулăхĕ?

Унăн сăввисене ăнланас, вĕсен тупсăмне палăртас тесен поэтăн малтанхи кĕнекисем хăçан кун çути курнине аса илмелле пулĕ. Сăвăçăмăр XX ĕмĕрĕн 70-мĕш çç. пуçламăшĕнче е 60-мĕш çç. вĕçнелле хăйĕн сассине тупнă. Çав вăхăтрах унăн хытах мар сасси – тантăшĕсемпе танлаштарсан – çирĕп ĕненĕвĕпе, çынлăхĕпе уйрăлса тăракан (ун чухне те, халĕ те) вăрттăн сасă. Хура тухатмăшсем тухатнă тавралăхри çутă пайăрки. Тухатнă тавралăх тенĕрен, вăл ӳсĕнӳсĕр, пăнтăх тапхăра пĕлтерекен Эйзинла сăнар пулать ĕнтĕ. Эпир – çав тĕксĕм витĕр тухнă çынсем. Ун чухне чĕрĕлӳ вăй-хăвачĕ пурнăçра чакса пычĕ, çынсем пĕр-пĕринчен ютшăнса-пăрăнса çӳретчĕç, пăчă сывлăшра сăмахпа ӳнер хавшаса пыратчĕ[50].

Çак сăвăçăн литературăри тӳпине И.А. Дмитриев тата витĕмлĕрех палăртнă: «Ун чухне эпир коммунизмăн тĕп лозунгĕсене – «пĕртанлăх, ирĕклĕх, тăванлăх» тенисене – ĕненмесĕр

тăма пултарайман. Анчах та пурнăçра вĕсене курман, хăйне, халăхне суяс темен поэтсем идейăсене мар, пурнăçа сăнланă, пурнăç хурлăхне, этем асапне кăтартнă. Çавăн пек поэт – П. Эйзин. Тĕрĕссипех каласан, пĕрисем айванла сăвăсем çырнă тапхăрта илем тĕнчине асап тĕнчипе çыхăнтарса этеме хӳтĕлекен, чуна тасатакан сăвă çыракан вăл çеç пулнă»[51] (туртни пирĕн. – *Н.И.*).

Вара сăвăçăн хăйĕн чун ыратăвĕсене пĕтерме ятарлă ăслай шутласа кăлармалла пулнă. Çакăн йышши сăвăсен ярăмне «Айванлăх кĕввисем» тесе ят хурать, халăхăн авалхи юрăçин питлĕхĕпе витĕнсе киревсĕр япаласем çинчен тӳррĕн калаçма пуçлать. Ятран никама та питлемест вăл (ку вăл поэзи тĕллевĕ мар), анчах ун пек чунсăр, хăрушă пурнăç йĕркине хăй йышăнма пултарайманнине уççăн палăртать[52].

Чăвашăн сăмахлă культури мĕн авалтан ытарлă çавăрса каласси патне туртăннă[53]. Эппин, хамăр литературăра та шухăша аякран, ытарлă çавăрса калама кăмăлланин сăлтавĕсем халăх сăмахлăхĕн хăйне евĕрлĕхĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ-тĕр.

Эйзинăн «Юр» сăввине илес пулсассăн, вăл йăлтах символсем çинче йĕркеленнĕ. Çиелтен пăхсан нимех те çук йĕркесенче тарăн шухăш, чун-чĕре ыратăвĕ пытараннă. *Юр* – ахаль юр мар, вăл лирика геройĕ хăй пулас, *сип-симĕс курăк*, *сар чечек*, *çил*, *хĕвел* сăнарĕсем те – символла сăнарсем. Çав сăнарсем урлă Эйзин лирика геройĕ хăй çак тĕнчере пĕр-пĕччен пулни пирки (ахальтен мар «Юр – ют пуриншĕн те» текен йĕркене уйăрать), унăн таса чунĕ никама та кирлĕ марри çинчен калать. Пирĕн пурнăç татах та çапла аталанса пырсан илем, динозаврсем пек, çĕр çинчен вуçех çухалма пултарасси пирки систерни те пур.

*Шурă юр*, *юр*, *юр пĕрчи* сăнарĕсем П. Эйзин пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Тĕрлĕ сăвăра тĕрлĕ енчен уçăлаççĕ пулин те, пĕлтерĕшĕ улшăнсах каймасть: вăл – тасалăх символĕ. «Шурă юр» сăвăра малтанхи йĕркесенчех хĕллехи ӳкерчĕк – юр ӳкни – тухса тăрать. Анчах: «Сукмакăм ман – тасалăх айĕнче. / Пĕр паллă та тăрса юлман халь. / Шур çиттипе витĕннĕскер, / те такăр пулнă вăл, / те тумхахлă?» – текен йĕркесене вуласассăн кунта сăмах шурă юр çинчен кăна пыманнине, унта тарăн шухăш пуррине сисетпĕр. Тен, лирика

геройĕн (е общество) пурнăçĕнче темĕнле улшăну пулса иртнĕ: «Ĕнер / хура чĕлхипеле / пуплетчĕ пылчăк: / «Эс манăн пул. / Эп санăн пулăп».

«Ĕнер» – совет саманинчи «пăнтăх» тапхăрĕ, çав тапхăрта этем «пысăк механизмăн» пĕр пайĕ («винтик») пулни çинчен çырнăн туйăнать: «Эс манăн пул. Эп – санăн пулăп». Нумайăшĕ вăл вăхăтра чунпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хуçăлнă: «...сар хĕвел – кӳлленчĕке кĕрсе выртма пĕрре те хăрамасть». Суяс, йăпăлтатас, çăхав çырас тес маррисем – «йывăççем» – хӳтлĕхсĕрччĕ, «çара уран та çара пуçă». Çакнашкал тӳрĕ чунлă çынсене коммунизм тăвакан обществăра сума сумастчĕç, социализм çулĕ хĕрринче çеçчĕ вĕсен вырăнĕ: «шăнса кӳтнĕскерсем çул хĕрринче тăратчĕç».

Хуралăх, икĕпитлĕх лачаки витĕр тухнă лирика геройĕ чунĕпе хуçăлман, анчах питĕ ывăннă, аманса пĕтнĕ. Халĕ çеç тăнăçлăх патне çитнĕ: «Лапка-лапка / шап-шурă юр çăвать. / Лапка-лапка / чуна лăплантарать».

Çак çаврана виçĕ хутчен калани, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисем çукки, интонаци лăпкăлăхĕ тата йĕркесем вĕçĕнче вăрăм тăхтавсем пурри пуплев еккине калуллăрах тăвать, лирика субъекчĕ аса илнине, шухăша путнине ĕнентерет. Эппин, йывăр вăхăтсем чăннипех те хыçа юлнă – лирика геройĕн чунри çăмăллăхĕ те ăнланмалла.

П. Эйзинăн уйрăмах «тĕрленчĕксенче» символизм вăйлă палăрать, вĕсенчен нумайăшĕнче лирика геройĕ каллех никама та кирлĕ маррине, вăл пуриншĕн те ют пулнине куратпăр.

Поэтăн тăтăш тĕл пулакан символла сăнарĕсем çаксем: *юр, хурăн, тумлам, кăвайт, çил-тăман, мăкăнь, пĕлĕт, уйăх, курăк, çиçĕм, çулçă, хĕвел, юпа, чечек, сурăх, сивĕ, сукмак, эрешмен, пахчаçă, чул, тӳпе, çумăр* т.ыт.те.

П. Эйзинăн лирика субъекчĕ тăршшĕпех Ырăпа Усал чиккинче. Сăвăсенче тасалăхпа çутăшăн тунсăхлакан черченкĕ чунăн ыратăвĕ сисĕнет, тепĕр чух вăл темĕнле читлĕхе лекнĕ пек туйăнать. Анчах герой, палăртрăмăр ĕнтĕ, яланах ункăна татса тухать. Çапла Эйзинăн нумай сăввинче кĕрешĕве асăрхатпăр. Тулаш вăйсемпе кĕрешни мар вăл, чун çывăрса, нишленсе каясран хăйĕнпе хăй кĕрешни, хăйне çĕнтерни.

## 2.2. *«Калла эп ҫаврӑнса пӑхатӑп –*<br>*Мӗн чухлӗ йышӑнман сӑмах!»*<br>(Любовь Мартьянова пултарулӑх тӗнчи)

Любовь Мартьяновӑн, П. Эйзинӑнни пекех, пӗтӗм пултарулӑх хавхине витерсе тӑракан кӗвӗ-ҫемӗ пур. Вӑл – *лирика героинине тӗнче ӑнланманни* (Эйзинӑн – тӗнче йышӑнманниччӗ). Ҫакна пулах малти плана *сӑмах* тухать: йышӑнман пуш сӑмах, ӑнланман сӑмах, сивӗ сӑмах, йӳҫӗ сӑмах, каласа пӗтермен сӑмах т.ыт.те.

Ҫак икӗ кӗвӗ-ҫемӗ хушшинче пӗрешкеллӗх питӗ нумай пулсан та, уйрӑмлӑхӗ те ҫук мар. Эйзинӑн «тӗнчи» хыҫӗнче общество тӑрать. Общество йышӑнманни – трагеди тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри. (П. Яккусенӗн вӑл каярахри тапхӑрта палӑрать.) Л. Мартьянова пултарулӑхӗнчи «тӗнчене» вара, ытти «хӗрарӑм поэзийӗнчи» евӗрех, арҫын калӑпласа-тытса тӑрать. Пӗтӗмпех тенӗ пек *лирика героини – арҫын* ятлӑ ҫыхӑнӑва пӑхӑнать: лирика объекчӗ ҫумра пулсан, тавралӑх та ҫураҫура, килӗшӳлӗхре; вӑл пулмасан – «ӗмӗлке юлать». Час-часах ҫепӗҫлӗх хаярлӑхпа (курайманлӑхпа мар), сивӗлӗхпе, мӑнкӑмӑллӑхпа чикӗленме пултарать. Ҫак шалти хирӗҫӳ тата хӑйне ӑнланччӑр (шеллеччӗр мар!) тени Мартьянова лирика героинин шухӑшлав еккинче ӳкерӗнет: вӑл хире-хирӗҫле аталанать, шухӑш кӗтменлӗхӗ те («парадокс») палӑрать.

Малтанхи тапхӑрта ҫирӗп кӗвӗсем илтӗнеҫҫӗ поэтессӑн. Каярах «тимӗрле» ҫирӗплӗх, чӑтӑмлӑх инерципе ҫеҫ пырать. Мартьяновӑн лирика субъекчӗ хӑйне тӑн-тӑн тыткалани – ҫиелти хупӑ ҫеҫ пулмалла. Хушӑран-хушӑ ҫиеле те тапса тухать ырату: халтан кайнин, ывӑнса ҫитнин кӗввисем илтӗнеҫҫӗ. Шалти хирӗҫӳ, кӗрешӳ лирика субъектне ывӑнтарса, айӗн-ҫийӗн лӑскаса пӗтернӗ кӑна мар – вӑл ӑна хӑратать те. Шалти хирӗҫӳ тата хӑрав пысӑк пулнӑран пулӗ Л. Мартьянова сӑввисем юхсашӑрансах пымаҫҫӗ. Ритмика вылявӗ пуян: ӑна тума пӗр ҫаврарах умлӑ-хыҫлӑ черетленекен икӗ тата виҫӗ картлӑ сӑвӑ виҫисем те пулӑшаҫҫӗ. Ҫапах ҫак пуян ритмика та сӑвӑсен кӗвӗлӗхне ӳстермест. «Автор сӑвӑсен тытӑмне ҫын хӑйпе хӑй калаҫнӑ пек, хӑй тӗллӗн шухӑшланӑ пек йӗркелет», – тет В.П. Тимаков[54].

Объектпала ҫыхӑну тупас тени Мартьянова лирика героинине сӑмаха кӗскен те вирлӗн калама хистет. Ҫакӑ сӑвӑсен

калăпăшĕ тата вĕсене еплерех йĕркелени çинче ӳкерĕнет: текстсем ытларах виçĕ, тăватă е пилĕк çавраран тăраççĕ (ултă, çичĕ çавраллисем питĕ сахал тĕл пулаççĕ). Л. Мартьянова чăваш хĕрарăмĕн сăнарне калăпласа тăрать. Çакă вăл чăн малтан туйăмсене ирĕке яманнинче, çиеле кăларманнинче палăрать.

Мартьянова лирики ĕнентерӳлĕхпе çеç мар, ыйтусен «тĕрлĕенлĕхĕпе» уйрăлса тăрать. Поэт тата поэзи, юратупа çутçанталăк, пурнăç тата вилĕм, вăрçăпа мир ыйтăвĕсене хускатать вăл, çынпала общество хушшинчи çыхăнусем те канăçсăрлантараççĕ ăна.

## *2.3. «Çăлтăрсен хĕлхемне çĕр çинче чĕртнĕскер»* **(Петĕр Яккусен сăввисенчи лирика геройĕ)**

Петĕр Яккусен поэзийĕнче чи çивĕч ыйтусенчен пĕри – «чăвашлăх», тăван халăхăн иртнĕ пурнăçĕ, хальхи тата пуласси тĕп вырăнта. «Ĕмĕртен пыракан çыхăнăва паянхи ăру çухатса ямĕ-ши? Аваллăхран килекен тымар яланлăхах татăлса юлмĕши?» – çак пăшăрханăва авторăн нумай сăввисенче куратпăр.

«Халăхсăр, чăваш идеалĕсĕр пуçне поэтăн индивидуализм тата пысăк космос вăйлăн палăрса тăраççĕ»[55]. П. Яккусен ĕмĕртен килекен, нихăçан кивелмен, этемлĕх умĕнчи чи кирлĕ философилле ыйтусене, уйрăмах: «Этемĕн пурнăç тĕллевĕ мĕнре?» – текен тата ытти çавăн йышши проблемăсене хускатать. Ăна уйрăм çын шăпи, пурнăçпа вилĕм, чăнлăх ыйтăвĕсем канăç памаççĕ. Хăйпе хăй кĕрешни, мĕн вĕçне çитиччен этемех юласчĕ тени П. Яккусенĕн пĕтĕм пултарулăхне витерсе тăрать.

Çак сăвăçăн лирика геройĕ – романтик. Пĕчĕккĕ чухнех ыттисенчен уйрăлса тăни, çутçанталăкпа çывăх пулни, халăхăн кун-çулĕ çинчен шухăшлани, хăй шутласа кăларнă илемлĕх тĕнчинче пурăнни, çын шăпине космоспа çыхăнтарни т.ыт.те – пĕтĕмпех романтика паллисем.

Романтик яланах пĕччен. Çавăнпа та П. Яккусен лирикинче пуç пулса тăракан кĕвĕсенчен пĕри вăл – *пĕчченлĕх* кĕввитуйăмĕ. П. Яккусен «пĕчченлĕхĕ» икĕ тĕрлĕ: <u>ирĕклĕх кӳрекенни</u> тата <u>пусарса тăраканни</u>. Малтанхи тапхăрти пĕччентлĕх лирика геройĕшĕн «чун минаречĕ» пек тухса тăрать, тулаш тĕнчене тата çак тĕнчере хăйĕн вырăнне тупас, ăнланса илес çĕрте вăл нимĕнрен ытла кирлĕ. Ку пĕччентлĕхе вăл хăй суйлать.

Лирика субъекчĕн каярахри пĕчченлĕхĕ вăл – çынсем хушшинче чун-чĕре ăшши, ăнланулăх, шеллев туйăмĕ иксĕлсе-тамалса пынăран ирĕксĕртен çуралнăскер. П. Яккусен пултарулăхĕнчи пĕчченлĕхĕн çак тĕсне кăмăл-сипет, «мораль» ютшăнăвĕ тесе ят пама пулать. Мĕншĕн тесен кунта çынсемпе çураçайманнинчен ытла – лирика геройĕ обществăра пуç пулса тăракан хаксене, виçесемпе идеалсене йышăнмасть. Юлашки çулсенче çырнă сăвăсене «Чун илемĕ никама та кирлĕ мар, йăлт арканать-ишĕлет-ванать, пурнăç тĕллевĕ çухалчĕ» текен пафос витерсе тăрать.

Малтанхи тапхăрта лирика геройĕн сăмахĕ хăй тĕллĕнех юхса-шăранса пынăн туйăнать, час-часах юрра та ĕнерĕнет. Сăвăран сăвва *хĕвел, чечек, юр пĕрчи, çăлтăр* тата ытти сăнарсем куçса аталанса пыраççĕ. Тулли рифмăсем, хăйне евĕр илемлĕх мелĕсем куçа шартаççĕ... Анчах та каярахпа калаçăвĕ улшăнать: малти вырăна *пуш хир* сăнарĕ тухать (тата *хура* тĕс тăтăшах мĕлтлетет). П. Яккусенĕн лирика субъекчĕ çак «пуш хирте» пĕчченлĕхпе асапланнине, кăмăлĕпе кӳтсе çитнине тата чун хавалĕпе такамран темĕн ыйтнине, кăшкăрнине сăвăсерен тенĕ пек тĕл пулакан ыйтуллă, кăшкăруллă, хиствлĕ предложенисем витĕмлĕ сăнарлаççĕ (уйрăмах «Çавра кӳлĕ» ятлă кĕнекере).

Предложени вĕçĕнче е варринче нумай пăнчă лартни вара сăвăлла хайлавсене темле хурлăхлă туйăм кĕртет, чун кăшкăрăвĕ «пыр тĕпĕнчен тухиччен хура хум хушшинче çĕтнине», каламалли шухăш нумайййине ĕнентерет. Интонаци пĕр ӳсет, пĕр анать; ритмика такăнать... Лирика геройĕ хăйне çынсем ăнланманнине (е ăнлансах пĕтерейменнине) сиссе-тĕр пысăк шухăшырату пытарнă сăмахсене час-часах вăрăм йĕрпе уйăрать.

Ытти пулăмсемпе япаласем пекех, сăвăç пултарулăхĕнчи *тӳпе* нумай пĕлтерĕшлĕ. Тӳпе уншăн çĕр çинчен кайсан пурăнмалли вырăн мар, вăл унăн тăван килĕ. Унта çеç лирика субъекчĕ чун килĕшĕвне тупать. *Тӳпери тăван килшĕн тунсăхлани* Петĕр Яккусен пултарулăхĕнче тĕп тема пулса тăрать.

### *2.4. «Çунать шап-шурă çутă...»*
### (Алексей Аттил тĕнчи)

Тасамарлăхра, арканура пулас-çуралас илеме курса тăрать А. Аттилăн лирика геройĕ, пурнăçпа тĕлĕнсе антăхни тĕп вырăн йышăнать сăвăсенче. А. Аттил илем, çураçулăх, пурнăç çĕнтерĕвĕ

пирки çеç калаçмасть, çак илем, пурнăçа юратни, ырă усала çĕнтерни унăн пултарулăхĕнче чăнлăх пек тухса тăрать.

«Шăпчăксăр», «анăçсăр» тата «хăй ачалăхĕпе ывăлĕн ачалăхĕсĕр» пуçне урăх нимĕн те çук унăн пурнăçĕнче. Ытла хăрушă. Çакăнтан та ытла пирĕн чуна кисретекенни пур: Алексей Аттил геройĕ хăй шăпине, тăван çĕре чĕререн тав тума, кӳрентерекене таса кăмăлтан каçарма вăй-хăват çитерет. Вăл «хура» тĕсре «шурă» курни хыçĕнче пирĕштилле тасалăх вĕлкĕшет. «Я думаю, что трагизм мироощущения чувашского поэта, пожалуй самого глубокого в своем поколении, был очищающим и без этого катарсиса невозможным было бы то ликование жизни, которое переполняет его стих», – тесе çырать Атнер Хусанкай[56].

А. Аттилăн поэзи тĕнчине йăлтах çутăран çыхса, эрешлесе тунă теме пулать. *Çутă* сăнарĕ унăн ахаль çутă çеç мар – темĕскер питĕ пысăккин, чи кирлин пуçламăшĕ. Е, унтан та ытларах, пуçламăшĕн пуçламăшĕ. Пуринчен те (усалпа ырăран та) çӳлте тăрать вăл. Тĕрлĕ сĕм йышăнсассăн та («çутă-çутă», «çутă», «сулхăн çутă», «шурă çутă») пĕлтерĕшĕ яланах пĕр юлать: пурте иртет, пурте пĕтет, çутă çеç ĕмĕрех пулнă, пур, пулать те. «Туратсен черчен хура тушьне çĕнсе» сăвăра юр çунин ялкăшăвне çеç куратпăр малтан. Анчах каярахпа çав *çутă* килес «кунсем», «çу вăхăчĕ» çине сапаланнине куратпăр та ăнланатпăр: «тăвансенĕн куçĕсенчи», «ачасен сăн-питĕнчи» *çутă* ахаль çиçев çеç мар. Вăл çӳл тӳпен, вĕçсĕрлĕхĕн ӳкерĕнĕвĕ... *Пурнăçа-илеме-çураçулăха пуç çапса пурăнас тени* Алексей Аттил пултарулăхĕн тĕп кĕвви-çемми пулса тăрать.

## 2.5. «*Клавишсем çийĕпе чĕлтĕртетрĕ / Чун таси*» (Георгий Федоров лирики)

Георгий Федоров сăввисенче ытларах – классикăлла формăсем. Ăна сонет, октава, рондо интереслентерет. Çак поэтăн илемлĕ тĕнчине канон, виçе тĕвĕлесе тăрать. Г. Федоров пултарулăхĕнче çĕнĕформăлăх, экспериментлăх туртăмĕсем çĕнтерместĕ, авангардизмпа модернизм элеменчĕсем те курăнсах каймаççĕ. Вĕсем вырăнне сăвăç тĕнче классикĕсен опытне ăс-тăна, чун варне пуçтарса кулленхи ансат япаласемпе пулăмсен вăрттăн нумайпĕлтерĕшлĕхне, нумайенлĕхне, курнă чăнлăха вулакан патне çитерме илĕртӳллĕ ăсталăх тупать. Сăвăсерен тенĕ пек тĕл

пулакан сăмах çаврăнăшĕсем лирика геройĕн тăрăмне хăйсемех уçса параççĕ: «тăр пĕччен», «вĕççĕр çухату», «лăшсăр ырату», «туслашрăм эпĕ хурлăхпа», «сивĕ каç – çумри малаш», «çӳретĕп халь ним тĕссĕр пӳлĕмре», «мана сăхланнă хăрăк шăллă манăç», «хуçаланать чунра хăр тăлăх тĕлĕк» т.ыт.те.

Лирика геройĕ кĕр вăрманне кĕрсен çеç унăн чĕри «ирĕккĕн те уççăн тапать», сарă кĕр ăна «хавхалантарать, çунатлантарать, сӳрĕк ĕмĕте хĕм вутлантарать». *Кĕр* – Г. Федоров пултарулăхĕнчи тĕп сăнар, вăл аталанать, тарăнланать: сисмесĕрех «кун-çул кĕрне», «этемлĕх кĕрне» куçать. Лирика субъекчĕ пĕрмаях *кĕр* сăнарĕ патне таврăннин тупсăмĕ сăвăсенчех: хальхи чун тăрăмĕ ăна, ӳнерçĕ чунлăскерне, тивĕçтермест, туйăмсен туллилĕхĕ çитмест, çара ăспа пурăнни ывăнтарса çитернĕ. «Соната пек тулли пулинччĕ пурнăç», – тет вĕл ĕмĕтленсе. Тепĕр хайлавра шалта мĕн пуррине пĕтĕмпех уçса парать:

Йăлтах эп çухатса пĕтернĕ...
Пур туйăма тăкса пĕтернĕ.
<...> Пуплет хавассăр мăкăл-мăкăл...
Вĕри хавалшăн сив ăс-хакăл.

Çавăнпа ĕмĕтри савнă юлташĕн сăнарĕ кăна мар, искусство çыннисем «чĕрĕлсе» куç умне тухаççĕ. Театр йĕркелесе ертсе пынăн туйăнать («ĕмĕлке театрĕ» сăмах çаврăнăшĕ нумай тĕл пулать).

Г. Федоров сăввисене темĕнле синкерлĕх тĕтри хупласа тăрать. Лирика субъекчĕн инкекĕ тулса çитнĕ туйăмсем-шухăшĕсем çинчен *тĕнчене каласа ăнлантарайманнинче е – калама хăяйманнинче, чунне уçайманнинче* пытаранна. *Калайман сăмахшăн пăшăрханни* – Г. Федоров пултарулăхĕн тĕп пафосĕ. Сăлтавĕ кунта геройра («Чи кирлине кала пĕлмерĕм. Чун таттине уça пĕлмерĕм»). Çак сăвăçа кĕвĕ-çемĕ тĕнчинче çеç çăмăл, унта кăна вăл чунне ирĕке ярать, рояль пĕр сассăр ларнă чухне ăна çав тери хĕн: вилесле сăнсем, ӳкерчĕксем куç умĕнче выляма пуçлаççĕ. Г. Федоровăн сăвăлла хайлавĕсенче тарăн шухăшпа туйăм пĕтĕçсе тăраççĕ. Вулаканшăн чи пĕлтерĕшли: вĕççĕр куççульпе хурлăх сăлтавĕ – малаш куншăн пăшăрханни – лирика геройĕ пĕр хăйшĕн çеç хыпса çуннипе çыхăнман. Ăна этемлĕх пуласлăхĕ, шăпи канăç памасть. «Ман ăшра кăна ӳтленнĕ этем шăпишĕн эрленсе йĕретĕп», – тет вăл. Тĕрĕссипе, лирика субъекчĕ мар туйăмсăр, унăн мар пурнăçĕ пушă та кичем – пирĕн. Автор

хăйне «эп поэт мар» теет пулсассăн та, шăпах çак самант ăна чăн-чăн сăвăç картне лартма май парать.

## *2.6. «Хăçан та пулсан пайланать çак планета»* (Михаил Сунтал сăввисенче пытарăннă чун хăравĕ)

М. Сунтал пултарулăхĕнче тĕрлĕ *сасă* мала тухать: уçлăх сасси, йывăç-курăк сасси, чул сасси, кайăк-кĕшĕк сасси т.ыт.те. Лирика геройĕ хупă ăшĕнче пулнăнах: тепĕр чух хăйĕн сасси çеç мар – хупăрласа тăракан тĕнче сасси унăннипеле пĕрлешсе хăй патне каялла таврăнать.

Чылай чухне поэтсем чăнлăх шыраççĕ. Сунтал лирика субъектне «ыйту», «хурав» интереслентермест. Вăл эпир пĕлменнине пĕлет: хăйне, тăван халăха мĕн кĕтнине тата тĕнче пĕтмĕшне курса тăрать. Çакă ăна хăратать, çавăнпа пĕтĕмĕшле пултарулăх пафосĕ унăн – пусăрăнчăк. *Тĕнче пĕтесси* – Сунтал пултарулăхĕнче пуç пулса тăракан кĕвĕ-çемĕсенчен пĕри.

Лирика субъекчĕ пĕччен пулни, унăн чунĕнче хăрав хуçаланни, темĕнле хупăра хăйпе хăй калаçни сăвă чĕлхинче ӳкерĕнет. Интонаци-синтаксис тытăмĕ кăшкăруллă, ыйтуллă формăсемпе пуянах мар, анчах сикчевсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Ăна нумай пăнчă йĕркелет. Кашни хутсăр предложени уйрăм йĕрке йышăнса хăйне тĕллĕн единица пек курăнса пырать. Вăл анчах та мар: çав пайрăмсем умлă-хыçлă купаланни пĕркĕвĕлĕх («монотонность») çуратать. Çапла пусăрăнчăк шухăш-туйăм уçăлмасть, татах та йывăрлатать.

Поэт темĕнле татса тухайми ункăра: «вăрттăн, çемçен» вилĕмпе кĕрешет, хăйпе хăй калаçать – чунне пусараймасть, мĕн пулмаллипе çураçасшăн – вăй-хăват çитерейместь. Чĕрери çак çапăçупа хăрав пыр тĕпне ĕсĕклев хытса та хытса пынин, сăвă чĕлхи пултарулăх тăршшĕпе уçăлса-якалса çитейменнин сăлтавĕ пулать. Поэт паянхи йывăр тăрăмран тарас-хăтăлас-манăçас тенĕ пекех ача чухнехи самантсене тĕпренчĕкĕн антăхса пуçтарать («Пăхать-ха хĕвел пĕр хушă» 2-мĕш кĕнекене пĕтĕмпех çамрăк вăхăта асаилсе çырнă).

Нумай чухне поэтсем хăйсен шалти чун тăрăмне тĕрлĕ пайрăмсем витĕр кăтартаççĕ. Сунтал пултарулăхĕнче *чул* сăнарĕ малти вырăна тухать, вăл пайрăм шайĕнчен çӳлерех. Асаплантарса-ывăнтарса çитернĕ шăпана, пурнăçа, тем пулсан та ху

çălман-пĕтмен-путман çирĕп кăмăла сăнарласа тăрать *чул*. Çак символла сăнар мĕнлереххине кура лирика геройĕн пурнăç тапхăрĕ, чун тăрăмĕ пирки пĕлме пулать.

### *2.7. «Эп пулман кунта – ан макăр / Вăл та пурăннă тесе...»* (Марина Карягина лирика героинин хăйне евĕрлĕхĕ)

Пĕрремĕш сăвăсенче пирĕн ума çĕр çинчи пурнăç, çак çĕр çинче пурăнакан питĕ туйăмлă çамрăк çын – лирика субъекчĕ – тухать. М. Карягина тĕнчинчи сăнарсем, ӳкерчĕксем чĕррĕн курăнаççĕ, унти япаласене курма-тытма май пур пек, лирика героини илтекен сасăсем пире те çывăх.

Анчах сăвăран сăвва вăл пирĕнтен çӳлерех те çӳлерех хăпарса пырать. Акă вăл тинĕспе пĕлĕт хушшинче, тинĕс кайăкĕ. Тинĕс кайăкĕ «Чăваш çĕрĕ» çине анса ларнине курмастпăр. Вăл ĕнтĕ, хăй калашле, «шар çулăм», вăл тата катарах, Чăвашăн тӳпери уйĕ патнелле вирхĕнсе вĕçет. Çӳлелле улăхнă май япаласем шупкалсах пыраççĕ. *Мĕлке, пăр, юр, чул çăлтăр* тата *хĕвел, уйăх* сăнарĕсем тĕпе тухаççĕ. «Юр пике», «Юр арăм» – тет хăйне лирика героини. Тĕпре – вĕçев çеç, хăлхара – сасă çеç. «Унка лекнĕ çӳп» вăл. Унта, çӳл тӳпере, кунти пек çул та çук. Е, «уçас çулĕ» пулсан та, вăл «çул мар: çип-çинçе! / Эрешмен пек пурнап çип çинче». Унтан та ытларах, «çулсем хăвăл пек». Вăл çӳллĕшрен эпир пурăнакан тĕнче «куç хăвăлĕ пысăкăш çеç», «куç хăмăрĕ тарăнăш» курăнать. «Тĕнче космосра юр пĕрчи пек вĕçсе çӳренине», «эпĕр пурте – хăйăр хурăмлă» пулнине палăртать Карягина лирика героини. Талккăш та, вăхăт чикки те çук унта.

Малтанлăха М. Карягина лирика героини ирĕке Пихампартан тилмĕрсе ыйтать: «Пихампар! Пар мана ура йĕррилĕх ирĕк – йăнăш утăмсемшĕн пил ан пар!» – тет вăл. Анчах мĕнлерех ирĕклĕх куратпăр-ха каярах:

Вĕçекенни – вĕçет:
Кам çăтмахра, кам чăтлăхра вĕçет,
Эп читлĕхре те – читлĕхре вĕçетĕп!

«Хăтлăхне, пуласлăхне, асаттесен пилне манса, çухатса пыракан чăваш тĕнчин (ирĕксĕрлевĕн) анлă пĕлтерĕшлĕ сим -

волĕ те вăл – читлĕх. Вăл пĕтĕм чăваш çĕр-сывлăшне пăчăртаса лартнă. Читлĕхре вĕçме хăват çитерекенсем ытларах кирлĕ, унран хăтăлсан тата та лайăхрах», – тесе çырать Ю.М. Артемьев[57].

Тĕпрен илсен, ăсчах шухăшĕпе килĕшмелле. Анчах символла сăнарăн ăнлантарăвĕ темĕн тĕрлĕ те пулма пултарассине шута хурсан ку пайрăм çине урăхла та пăхма май пур. Читлĕх лирика героинин ӳт-пĕвĕ, кĕлетки пулнăн туйăнать. Сăвăра вăл – «пуш-пушă пӳлĕм». Мĕншĕн пушă? Хуравне те автор хăйех калать: «Ӳтсем – чунсем кайсан – çапла тăрса юлаççĕ». *Чун ӳтпеле пĕрле пĕр çыхăра пулманни* – М. Карягина сăввисен тĕп çеммисенчен пĕри. Поэтесса хăй калашле, «пĕрле-уйрăм». Карягина лирика героинин чăн телейĕ те, тĕп инкекĕ те çакăнта пулас.

Тӳпере, космосра вĕçекен чуна çĕр çинчи пурнăçпа çыхса тăраканĕ – унăн кĕлетки. Анчах кĕлетке, тепре палăртар, хăйне май читлĕх. Çавăнпа лирика субъекчĕшĕн «вилĕм – чăнлăх» пулни ăнланмалла. Ма тесессĕн вилĕм читлĕхе аркатать-çке.

Лирика героинин ӳт-пĕвĕ те хăйне евĕр. Вăл, Ю.М. Артемьев каланă пек, «çĕр çинчех, хăтланса, тирпей-илем кӳрсе çитереймен кулленхи пурнăç юхăмĕнчех ишнĕн»[58] туйăнмасть. Вăл каллех пирĕнпе пĕрле те – уйрăм. Савни, ачи-пăчи, мăшăрĕ кăшт кăна курăнса иртеççĕ унăн çĕрти пурнăçĕнче.

М. Карягина хăйне тăтăшах шывпа, тинĕспе танлаштарать. Тинĕс – чунпа кĕлетке пĕрлешес вырăн – кĕтнĕ ирĕклĕх пулмалла. Çак сăвăçăн лирика субъекчĕ кайран (вилсен) космосра юлмĕ, вăл шывран тухнă, унтах таврăнĕ, кайран каллех унтанах тухĕ... Тинĕс уншăн – вилĕмсĕрлĕх, хăватлăх палли. Вĕçĕ-хĕррисĕр пурнăç çаврăнăвне калăпласа тăрать *шыв*.

### *2.8. «Чунра – йĕрӳ, хĕрхӳ, улах»*
### (Надежда Сельверстровăн вăрттăн чун тĕнчи)

Надежда Сельверстрова лирикин тĕп кĕввине пĕр сăмахпа «хăйпе хăй калаçни, хăйне хăй итлени е – чун шырани» теме пулать. Пĕр енчен çак калаçу М. Сунталăн калаçăвне аса илтерет. Анчах Сунтал лирика геройĕ хупăра хăйпе хăй пуплени пыр тĕпне каплам пуçтарать, йывăрлăх патне илсе пырать пулсассăн – Сельверстрова героинишĕн хăйпе хăй калаçни – пĕртен-пĕр чĕрĕ юлмалли, ирĕке тухмалли мел. Унăн пĕр чуна çеç мар, пĕтĕм тĕнчене те шăнăçайми шухăш-туйăмĕсем вула-

кана туртаççĕ, хăратаççĕ («Шухăшран та хăраса / Сирпĕнсе каять кӳлленчĕк»). Лирика героинин чунĕнче лăпкăлăх çук, вăл чăтаймасăр каллĕ-маллĕ утма пуçлать: шалти канăçсăрлăх кĕлеткене, ал-урана куçать. Туйăм – куçа курăнать.

«Куçа курнакан сывлăш, вĕриленнĕ ăрша» – юратупа хыпса çунакан чĕре, вĕри туйăмсем – çурхи тулса çитнĕ пĕве пек. Халĕ, çак вăхăтра, мĕнпур туйăма çиеле кăлармасассăн, калаçмасассăн – пĕтĕмпех кĕрлесе татăлса каять. Лирика героини патак илсе часрах-часрах шыв çулĕ уçать тейĕн, шухăша кĕскен-кĕскен, хăвăрт-хăвăрт калать. Çавăнпа Сельверстрова сăввисенче вăрăм йĕр, икĕ пăнчă питĕ нумай, кăшкăру палли те пур: «Итлĕр!» – тет кĕтмен çĕртен. Вăрăм йĕрсем пĕр шухăш çаврăмĕ тепĕр шухăш çаврăмне хирĕçленине кăтартмаççĕ, пачах урăхла – çыхăнтараççĕ. Икĕ пăнчă пуплеве уçăмлăх кĕртме пулăшать. Пуплев кĕскен-кĕскен хывăнни хыçĕнче шухăшсăрлăх, туйăмсăрлăх пытарăнса тăмасть. Пачах урăхла, сăвăç вăйлă юхăма аран-аран йĕркене кĕртсе ĕлкĕрсе пырать. Сельверстровăн сăвăлла хайлавĕсене сăнарлăх витерсех тăманни те шалти капланупа çыхăннă. Илемлĕх мелĕсем пирки шутласа ларма вăхăт-и?! Кунта – чĕрĕ юласчĕ, çавăн чухлĕ çĕклем пусарнă чуна кăшт та пулин çăмăллатасчĕ! *Асапланăвăн сăлтавĕ* вулакана тӳрех ăнланмалла, лирика героини ăна пытармасть, вăл – *савман савнин сивви тивни.*

Лирика героинин пĕтĕм чĕр пурнăçĕ каçпа иртет. Уншăн каç талăк пек («Кунсемпе ирсем – каç урлă»). Н. Сельверстрова, Любовь Мартьянова пекех, чăваш хĕрарăмĕн сăнарне калăпласа тăрать тейĕн. Шалта – вут-хĕм, çил-тăвăл, сăн-питре вара – «кавар канлĕх». «Тăртанса пăчăртаннă тута» çеç пыр тулли чун кăшкăрăвĕ пурри, пиншер туйăм айĕн-çийĕн çавăрттарни пирки калать. Кĕлеткене ирĕке ярса «пушанас», «çăмăлттайланас» пулсассăн çăмăлрах пулĕччĕ. Анчах чарăну палли (нумай пăнчă) апла хăтланма май çукки çинчен систерет. Ун вырăнне – «иелле кулни» кăна. Ун вырăнне – «йывăра веçех илни».

Н. Сельверстровăн сăввисем нумай мар. Апла пулин те вĕсенчи туйăм тарăнлăхĕ пире тыткăнлать, чăваш хĕрарăмĕн вăй çирĕплĕхĕ ăмсантарать.

## III. ЛИРИКА ГЕРОЙĔСЕН СИНКЕРЛĔ ТĔНЧЕКУРĂМĔН ХĂШ-ПĔР СĂЛТАВĔСЕМ

### *3.1. Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнчи «чăвашла» (Тухăçла) тата Анăçла шухăш палăрăмĕсем*

Иккĕмĕш сыпăк вĕçĕнче эпир П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил, М. Сунтал, Г. Федоров, М. Карягина, Н. Сельверстрова тата ытти синкер тĕнчекурăмлă поэтсем текен пĕтĕмлетӳ патне çитсе тухрăмăр. Анчах тĕнче йышăнманни, тĕнче ăнланманни, пĕчченлĕх, калас сăмаха калайманни çеç-ши йывăрлăх кӳрет вĕсене? Ахăртнех, урăх енсем те пур. Çак ыйтăва татса парас тесессĕн В.Г. Родионов тĕпчевçĕ Çеçпĕл Мишши трагедине мĕнле ăнлантарнине пăхмалла.

Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, чир те, телейсĕр юрату та, выçăллă-тутăллă пурнăç та Çеçпĕл инкекĕнче тĕп вырăнта мар. Тĕп сăлтавне Родионов XX ĕм. пуçламăшĕнчи чăваш наци культурин парадигми улшăнăвĕпе çыхăнтарать. XVIII ĕм. 40-мĕш çç. чăвашсем хушшинче православи тĕнне, йăли-йĕркисене сарма пуçлани каярах чăваш наци культурин парадигма улшăнăвĕн никĕсĕ пулса тăнă.

Автор шухăшĕпе, XX ĕм. наци ăнĕ икĕ тĕрлĕ: традицилле тата çĕнĕлле, Европăлла. Пĕрремĕшĕ, традицилле ăн, Европăлла хаос вырăнне ĕмĕрхи çураçулăх çине таянать; тĕнче ик енлĕ анчах курăнмасть Тухăç сыннине – виç енлĕ; вăхăт та тӳрĕ йĕрпе мар, спираль çаврăнăвĕ пек аталанать т.ыт.те.

Çапла вара XX ĕм. пуçламăшĕнче чăваш халăхĕн социокультура парадигми палăрмаллах улшăннă. «Çакă вăл социаллă кисренӳсен условийĕсенче наци интеллигенцийĕн пĕр пайне (кунта чăн малтан В.Г. Родионов Çеçпĕле кĕртет. – *Н.И.*) пысăк трагеди патне илсе çитерет: вĕсем анăçла шухăшлама питĕ хăвăрт вĕренсе çитеççĕ, анчах чăнлăха кивĕлле, чăвашла йышăннă», – тесе çирĕплетет ăсчах[59].

Çакнашкал шалти хирĕçӳ, икĕ тĕрлĕ расна шухăшлав хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнче те палăрать. Акă <u>чăвашла шухăшлав</u> палăрăмĕсем:

*1. Çураçулăх патне туртăнни* чăвашсен наци характерĕнче йĕр йĕрленĕ: вĕсем чĕрре кĕрсе тавлашма, хирĕç тӳррĕн калама тăхтаса тăраççĕ. Çак уйрăмлăха нумай тĕпчевçĕ-ăсчах тахçанах асăрханă (Г.Н. Волков[60], И.Я. Яковлев[61], Г.И. Комиссаров[62] т.ыт.те). Хальхи лирика геройĕсем те калаçура çураçулăх-ăнлану патне туртăнаççĕ, объекта кӳрентерессинчен пăрăнаççĕ. Малти вырăна поэтăн лирикăлла «эпĕ» текенни тухать пулсассăн та, вăл «эсир», «вĕсем» тенипе хирехирĕçленет:

*Эп*
*йĕрес пулсан – ăнланĕччĕç,*
*йĕрес пулсан – каçарĕччĕç* (Л. Мартьянова).

Объекта кӳрентерес теменни лирика геройĕсене хăйне май маска тăхăнма хистет, «эсĕ», «вăл» («вĕсем») вырăнне «эпир» тесе калаттарать: «Эпир – вазăри чечексем» (П. Яккусен).

Авалхи чăвашсем çынпа çын хушшинчи çураçулăх патне анчах мар – çутçанталăкпа этем хушшинчи çураçулăх патне туртăннă[63]. Пирĕн лирика субъекчĕсем те хупăрласа тăракан йывăç-курăк, шыв-шур тĕнчипе килĕшӳре пурăнма тăрăшаççĕ. Вĕсемшĕн пĕтĕмпех чунлă. «Эп татни, çăлни е кăклани шăппăншăппăн хурланса йĕрет», – тет П. Яккусен. П. Эйзинăн чулĕ йывăррăн сывлать, М. Сунталăн – ĕмĕрсен сывлăшне упрать; М. Карягинăн тинĕсĕ чĕрĕ т.ыт.те. Çутçанталăк тĕнчи лирика геройĕсемшĕн çын тĕнчинчен çывăхрах тесе çирĕплетме пулать.

Чăваш сăвăçисен (Айхин, Эйзинăн, Мартьяновăн, Яккусенĕн, Аттилăн т.ыт.те) пĕрремĕш вырăна *шурă (сарă)* тĕс тухать – пĕтĕм тĕссен гамминче 70–75% пулать. Пурте пĕлеççĕ: шурă (сарă) тĕс – тасалăх, çураçулăх символĕ. Эппин, çак тĕс мала тухни лирика геройĕсем килĕшӳ, çураçтару патне ăнтăлнине лайăхрах ĕнентерет. Унсăр пуçне тата юр, юр пĕрчи сăнарĕ (тасалăх символĕ) тĕпре. (Çак хăйне евĕрлĕхе чăваш критики унчченех асăрханă, анчах ăнланманни те пулнă, çитменлĕх вырăнне йышăннă. Тĕслĕхрен, А. Воробьевăн «Пысăк ăсталăхшăн» статйи)[64].

2. Хальхи чăваш сăвăçисем «ята ярас марччĕ, çын сăпатне çухатас марччĕ» текен кăмăл-сипете тĕпе хураççĕ. («Чувашское слово означает нравственно-поведенческие устои, установленные в социуме. Так, в чувашском видении личность – это человек, имеющий право называться «çын», то есть имеющий определенные ценностные ориентиры, совпадающие с общенародными»[65].)

Анăçла шухăшлав ăçта курăнать-ха? Лирика геройĕсем вăхăта спираль çаврăнăвĕ пек йышăннă вăхăтрах линилле те йышăнаççĕ. Çакă вăл чи пысăк палăрăм. Тĕслĕхрен, П. Яккусен: «Нихăçан та эс вилместĕн, «çын вилет» тени пустуй», – тет пĕр тĕслĕхре, хыççăнах: «Тепре каласан – васкани Ура утнă чух анчах», – тет. Çакă вăл шалта хирĕçӳлĕх туйăмĕ çуратать. А. Аттил пĕр сăвăра вилĕме тепĕр шая куçмалли тапхăр пек ăнлантарать, «Шакăлтатĕ шăпчăк пĕринче» хайлавра кайăк юррине ĕç-хĕл çинчен манса итлеме чĕнет. «Сан валли юрламĕ вăл ыран», – тет. М. Сунтал геройĕ пĕрре: «Вилĕм çук», – тет, çав вăхăтрах вăл вилĕмрен, хăй кунтан кайсан тĕппипех çухаласран хăрать. Г. Федоровăн лирика геройĕ: «Вилсен те ӳт, шутларăм – чунăм юлĕ», – тет. Хыççăнах хăй вилсессĕн сăмахсăр пуçне нимĕн те юлманни пирки калать.

Хальхи поэтсен сăвă чĕлхинче те киввипе çĕнни харăс ӳкерĕннине асăрхатпăр. Акă вĕсен пултарулăхĕнче чăваш тĕнчине сăнарлакан сăмахсем: *ут, лаша, урхамах, тиха, ыйткалакан, кăмака, вучах, алтăр, хуран, çурла, чăкăт, уйран, тенкĕ, шӳлкеме, арча, пир хутаç, улăп* т.ыт.те. Çĕнĕ пурнăça, çĕнĕ шухăшлава кăтартаканнисем: *партитура, гастроном, аквариум, симфони, зал, оливка ращи, фейерверк, зооцирк, линза, Ева скульптури, Нефертити, ля меболь, Сальери, марсианин* т.ыт.те.

Чăваш чĕлхинче тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче «тесе» («терĕ», «текен») татăк пур: хальхи авторсен илемлĕ чĕлхинче çакнашкал чăвашла йĕркеленĕ предложенисем нумай. Апла пулин те вырăс чĕлхинчи синтаксис тытăмĕпе йĕркеленĕ предложенисем сахал мар тĕл пулаççĕ: «Эп кăшкăртăм: – Ăçта чунăр?!» (П. Эйзин).

Çапла сăвăççен чăвашла йĕркеленĕ предложенисемпе çума-çумăн тăтăшах «вырăсла» предложенисем черетленеççĕ (А. Аттилăн пуринчен те ытла тĕл пулать). Жанрсене, сăвă виçисене, сăнарлăх тытăмне илсе пăхас пулсассăн та çакнаш -

кал ӳкерчĕкех: сăвăçсен пултарулăхĕнче икĕ тĕрлĕ шухăшлав пурри яр уççăн курăнса тăрать. Çакă вăл шалта хирĕçӳ туйăмĕ вăратать.

## 3.2. «*Чикĕри тăрăм» тата сăнарсем хире-хирĕçле аталанни*

Лирика субъекчĕсем икĕ тĕрлĕ социокультура хушшинче пулни хăйне евĕрлĕ тăрăм çинчен калаçма май парать. **«Чикĕри тăрăм»** («состояние межстоянья») тесе палăртрăмăр ăна. (Тен, чăвашсем хушшинче хăйсем çине алă хурасси анлă сарăлни те çак тăрăмпа çыхăнман-ши...) Тишкернĕ хыççăн *пур лирика геройĕшĕн те кăтартуллă* «чикĕри тăрăмсем» тата лирика субъектне *пĕр хăйне çеç тивĕç*, ăна ыттисенчен уйăракан *тăрăмсем* пурри курăнчĕ.

Пĕрремĕш тĕсĕ – тин кăна палăртнă икĕ расна социокультура хушшинче пурăннăран çуралакан «чикĕри тăрăм». Унсăр пуçне *çул* сăнарĕпе çыхăннă тăрăм та лирика геройĕсене пĕрлештерет: вĕсем пĕр вырăнта та тăмаççĕ, çав вăхăтрах инçе çулра çӳренине те курмастăн (яланах тăван килте, ял таврашĕнче, кӳлĕ е юхан шыв хĕрринче, улăхра, уй-хирте), çула пуçтарăннă е тăван тĕнчен чиккине çитнĕ саманта çеç сăнать вулакан. Тепĕр пĕрлештерекен ен – лирика субъекчĕсем яланах *çутăпа тĕттĕм* (каçпа ир е кунпа каç) тата *ырăпа усал чиккинче* пулни.

Петĕр Эйзинăн хăйне çеç тивĕç «чикĕри тăрăмĕ» вăл – лирика геройĕ *пӳлĕмпеле тулаш хушшинче пулни* (шалта та мар, тулашра та мар). Петĕр Яккусенĕн «чикĕри тăрăмĕсем» пĕрре кăна мар: пурăнас килни тата пурăнас килменни; чечеклĕ уй-хир – шырлан; хула – ял; Турра ĕненни – ĕненейменни; тунă пусăм – тăвас пусăм; чăн – асамлăх т.ыт.те. Анчах тĕп тăрăмĕ вăл – *çĕрпе тӳпе хушшинчи тăрăм*. Марина Карягина *виçесĕр ирĕкпеле ирĕксĕрлĕх хушшинчи тăрăмра* («Читлĕхре те – читлĕхпе вĕçет»). Надежда Сельверстрова лирика героини *савăшура пуçа çухатса манăçаслăхпа чун мăнаçлăхĕ, тасалăхĕ хушшинче* асапланать. Любовь Мартьянова тӳрремĕнех палăртать: «Пĕр енчен чĕнет – *мăнкăмăллăх,* / Илĕртет *хисеплĕх* тепринчен». Георгий Федоров лирика субъекчĕ *сăмахпала кĕвĕ хушшинчи* тăрăмра. Михаил Сунталăн – *хитре ачалăхпа шелсĕр пуласлăх хушшинче*, халĕ, çак самантра, вăл пурăнмасть те пек.

Алексей Аттилăн та пĕр хăйне çеç тивĕç тăрăмĕсем пур: *çутçанталăк чĕрçийĕпеле çӳлти кайăксен патефонĕ хушшинчи* тăрăм; *икĕ Çутă хушшинчи* тăрăм. Анчах чи пĕлтерĕшли тарăнрах вырнаçнă. Ăн айĕнчи шайра лирика геройĕ – чăваш, унра несĕлсен чунĕ пурăнать; ăс-тăнĕпе вара Анăç культури патне туртăнать. Икĕ *расна социокультура хушшинче* пулни Алексей Аттил пултарулăхĕнче, хальхи сăвăçсемпе танлаштарсассăн, вăйлăрах палăрать. Çавăнпах-тăр унăн трагедийĕ пуринчен те тарăнрах. Сăвă тĕнчинче лирика геройĕ çав синкерлĕхе çиеле кăлармасăр хăварма, çĕнтерме вăй çитерет пулсассăн – чăн пурнăçра поэт психика чирĕпе чирлесе каять (Çеçпĕл хăйĕн çине ал хурать). Сăлтавĕсем, тен, çак шалти хирĕçӳлĕхпе те çыхăннă...

Çапла, «чикĕри тăрăм» лирика субъекчĕсен чунĕнче канăçсăрлăх туйăмĕ çуратать. Çакăнтанах пулас пĕр сăвăçăнах, пĕр сăнарах нумай чухне хире-хирĕçле аталанать. Сăмахран, П. Эйзин поэзи тĕнчинче *уйăх* пĕрре ырă сăнар – вăтанчăклăха, çутта, тасалăха кăтартать; тепринче – уйăх чӳречерен чакаланса кĕрет, лирика геройне шыраса вырăн çине улăхать, ытаклать ăна, пăвать, лечекелет тутипе (намăссăрлăха, килпетсĕрлĕхе калăплать).

Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнче нумай-нумай сăнар хире-хирĕçле аталанать – пĕртен-пĕр *анне* сăнарĕ çеç улшăнмасть. Сăвăçсен пултарулăхĕнче анне сăнарĕ мĕнлерех вырăн йышăннинчен лирика геройĕн тĕнчекурăмĕ, трагеди тарăнăшĕ, шăпи тӳрремĕнех килет.

## ПĔТĔМЛЕТӲ

Литература пĕлĕвĕнче сăвва тишкермелли расна меслетсем, тĕрлĕ шкулсем нумай: форма меслечĕ, структура шкулĕ, микросемантика тишкерĕвĕн тĕслĕхĕсем т.ыт.те. Вĕсен лайăх енĕсемпе пĕрлех пĕр пысăк çитменлĕх пур: тĕпчевçĕсем сăвă хапине çеç малти вырăна лартаççĕ, хайлавăн пĕрлĕхне куçран çухатаççĕ.

Л.И. Тимофеев, М.М. Бахтин, В.В. Кожинов, В.Г. Родионов лирикăра содержанипе форма уйрăлми тачă çыхăнура пулни пирки пусарса калаççĕ, тишкернĕ чухне тулашпа шалаша уйăрса пăхсассăн та – чăн юлашкинчен синтез тумалла тесе тĕрĕсех çирĕплетеççĕ.

XX ĕм. 60–90 çç. чăваш лирикинче тухăçлă тапхăр пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Унччен сăвăсенчи сăнар, тĕпрен илсен, хастар хавассăр класс кĕрешӳçи пулнă пулсассăн, 1950 çç. вĕçĕсенчен этемĕн шалти тĕнчипе кăсăкланасси, онтологи ыйтăвĕсене хускатасси пирĕн тăван литературăра (вырăссеннипе танах) вăй илет. Гуманизм теми, çын чунĕн илемлĕхĕпе тарăнлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

Çыру ăсталăхĕ те улшăнать: шурă сăвă (састашсăр) тата верлибр вăй илет; сăвă çаврисем унченхилле тăвата йĕркерен анчах мар – 2, 7, 8, 15 йĕркесенчен тăма пуçлаççĕ, çав çаврасем тата «картлашкаланаççĕ»; йĕркесене пĕчĕк саспаллипе пуçлани тăтăшланать. Кашни сăмаха сыпăкăн-сыпăкăн пайлани е уйрăм йĕркене вырнаçтарса сăвва «юпаласа» кайни те тĕл пулать. Чарăну паллисем (нумай пăнчă, вăрăм йĕр) пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Ыйтуллă, хистевлĕ, кăшкăруллă предложенисем лирика геройĕсем пĕчченлĕхпе, общество сивĕлĕхĕпе куçа-куçăн тĕл пулса асапланнине витĕмлĕ кăтартаççĕ. Сăнарлăх тĕлĕшĕнчен те пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ ку тапхăрта: унччен нихăçан пулман абстрактлă танлаштарусем, сăпатлантарусем, метафорăсем усă кураççĕ поэтсем. Шухăша ытарлăн, символсемпе çавăрса каласси ӳсет.

Улшăнусем Г. Айхирен пуçланаççĕ, ун хыççăн çĕнĕ ятсем тухаççĕ: П. Эйзин, А. Аттил, В. Энтип, Н. Теветкел, М. Сениэль, Л. Мартьянова, П. Яккусен т.ыт.те. Паянхи сăвăçсен пĕтĕм пултарулăх хавхине пĕрешкелтерех, пачах çĕнĕ кĕвĕ-çемĕ витерсе тăрать: лирика геройĕсене тĕнче ăнланмасть, йышăнмасть, таса чунĕ вĕсен савнă çынна та, обществăна та кирлĕ мар. Çакă вăл синкерлĕх туйăмĕ вăратать. 1960–1990 çç. вăй хурса ĕçлекен сăвăçсем – трагедилле поэтсем.

Хальхи авторсем паянчченех икĕ тĕрлĕ шухăшлав (Анăç тата Тухăç), икĕ расна социокультура хушшинче – «чикĕри тăрăмра» – пулни шалта хирĕçӳлĕх вăратать, синкерлĕх туйăмне тата та вăйлатать. Анчах чунра темĕн пек йывăр пулсассăн та лирика геройĕсем чĕрипе хытмаççĕ, тискерленмеççĕ, «ята ярас марччĕ, çын сăпатне çухатас марччĕ» текен кăмăл-сипетпе пурăнаççĕ. Вĕсене хăйсен хуйхи-суйхинчен ытла чăвашăн, Тăван çĕршывăн тата этемлĕхĕн пуласлăхĕ, чăваш чĕлхин çивĕч ыйтăвĕсем канăç памаççĕ.

Çапла XX ĕм. 60–90 çç. медитаци, пейзаж, юрату тата гражданла лирика вăй илсе тухăçлă аталанать.

### Литература тата асăрхаттарусем

[1] *Ермакова Г.А.* Философские мотивы творчества Г. Айги и восприятие их читателем: дис. ... канд. филол. наук. Чебоксары, 1996; *Ермакова Г.А.* Эстетические основы художественного мира Г.Н. Айги: дис. ... д-ра филол. наук. Чебоксары, 2004; *Софронова И.В.* Традиции восточной поэзии в чувашской лирике 20–90-х гг. XX в.: дис. ... канд. филол. наук. Чебоксары, 2004; *Владимирова О.Г.* Становление и развитие чувашского силлабо-тонического стиха: дис. ... канд. филол. наук. Чебоксары, 2004; *Иванова Е.Ю.* Поэтический мир А.А. Воробьева: дис. ... канд. филол. наук. Чебоксары, 2004; *Скворцова О.В.* Основные литературно-стилевые тенденции в чувашской лирике второй половины XX в.: дис. ... канд. филол. наук. Чебоксары, 2000. (О.В. Скворцова иртнĕ ĕмĕрĕн 70–80-мĕш çулĕсенчи чăваш лирикинчи лиературăпа стиль туртăмĕсене шырарĕ, М. Волкова, В. Энтип, Н. Теветкел, В. Урташ, Ю. Айташ поэтсен сăввисене тĕплĕн тишкерчĕ. Çавăнпа та хальлĕхе эпир çак сумлă ятсене тĕкĕнмерĕмĕр. Анчах пирĕн ӳлĕм тухас кĕнекесенче вĕсен ячĕсем, паллах, хăйсен вырăнне тупĕç.)

[2] *Родионов В.Г.* Поэзие тĕпчес ыйтусем // П.П. Хусанкай: статьясен пуххи. Шупашкар: ЧĂТИ, 1988. 37 с.

[3] Литературный энциклопедический словарь / под общ. ред. *В.М. Кожевникова*, *П.А. Николаева.* М.: Сов. энциклопедия, 1987. С. 473.

[4] *Томашевский Б.В.* Язык и стиль: стенографические публикации. Л.: Знание, 1952. С. 57.

[5] *Кожинов В.В.* Стихи и поэзия. М.: Сов. Россия, 1980. С. 37.

[6] *Лотман Ю.М.* Анализ поэтического текста: структура стиха: пособие для студентов. Л: Просвещение, 1972. С. 15.

[7] *Гончаров Б.П.* Поэтика Маяковского: лирический герой послеоктябрьской поэзии и пути его художественного утверждения. М: Наука, 1983. С. 7.

[8] *Гей Н.К.* Художественность литературы: поэтика, стиль. М.: Наука, 1975. С. 163.

[9] *Лотман Ю.М.* Структура художественного текста. М.: Искусство, 1970. С. 7–8.

[10] *Федоров В.В.* О природе поэтической реальности: монография. М.: Сов. писатель, 1984. С. 16.

[11] *Гаспаров М.Г.* Лингвистика и поэтика. М., 1979. С. 145–153.

[12] *Гаспаров М.Г.* «Снова тучи надо мною...»: методика анализа стихотворного текста // Русская речь. 1997. № 1. С. 15.

[13] *Тимофеев Л.И.* Слово в стихе. 2-е изд. М.: Сов. писатель, 1987. С. 220.

[14] *Мальчукова Т.Г.* Память поэзии: учеб. пособие по спецкурсу (О сравнительной типологии изучения классической лирики). Петрозаводск, 1985. С. 34–35.

[15] *Гончаров Б.П.* Указ. соч. С. 17.

[16] *Ильин Д.П.* Эстетический феномен поэзии: (анализ лирики): Контекст – 1986. М., 1987. С. 113, 116.

[17] Там же. С. 117.

[18] *Калачева С.В.* Опыт компьютерных исследований в стиховедении // Вестник Московского ун-та. 1991. № 6. С. 59–67. (Филология; серия 9).

[19] *Кожинов В.В.* Указ. соч. С. 15–16.

[20] Там же. С. 26.

[21] *Карамзин Н.М.* Сочинения: в 2-х т. / сост. Г.П. Маконенко. Т. 2. Л.: Худож. лит., 1984. С. 13.

[22] *Бахтин М.М.* Вопросы литературы и эстетики: исследования разных лет. М.: Худож. лит., 1975. С. 34.

[23] *Кожинов В.В.* Указ. соч. С. 27.

[24] *Родионов В.Г.* Поэзие тӗпчес ыйтусем. 49–50 с.

[25] *Гегель В.Ф.* Эстетика: в 4-х т. Т. 1. М.: Искусство, 1968. С. 49–50.

[26] *Федоров В.В.* Указ. соч. С. 20.

[27] *Родионов В.Г.* Комплиментсемпе мар, фактсемпе хаклар // Тӑван Атӑл. 1986. 7 №. 66 с.

[28] *Т.В.* [*В. Долгов?*]. «Тӑвӑлпа ҫунатланнӑ» поетсем, е Авалхипе ҫуначӗсене амантакансем // Сунтал. 1928. 1 №. 21 с.

[29] *Кели.* Ялавин криттӗк тӗкӗрӗнчи Хусанкай // Сунтал. 1930. 3 №. 22 с.

[30] *Родионов В.Г.* Вӑхӑт тивӗҫӗ // Тӑван Атӑл. 1988. 4 №. 52 с.

[31] *Орлов Г.* Поэзи – халӑх чунӗ // Тӑван Атӑл. 1983. 6 №. 63–70 с.

[32] *Васан А.В.* [*Васильев*]. Хавхалану хавалӗ. Шупашкар, 1987. 26 с.

[33] *Васильев А.В.* [*Васан*]. 1976 ҫулхи чӑваш поэзийӗ // Труды / ЧНИИ. Вып. 77. Чебоксары, 1976. 102 с.

[34] *Федоров В.В.* Указ. соч. С. 20.

[35] *Дьяконов П.* Сто рублей за объяснение: (письмо в редакцию) // Биржевые ведомости (вечерний выпуск). 1909, 12 февраля. № 10956. С. 3.

[36] *Городецкий С.* Новейшие течения в современной поэзии // Аполлон. 1913. № 1. С. 48.

[37] *Волков Л.* Çĕнĕ туйăм çуратать // Тăван Атăл. 1987. 8 №. 70–72.

[38] Çавăнтах. 70 с.

[39] *Хусанкай А.П.* Поиск слова: литературно-критические статьи. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1987. **С**. 85.

[40] *Ставский М.* Сăвăç хăйсăнлăхĕ // Экспресс-информ. 1992. № 11. 5 с.

[41] *Юмарт В.* Ӳсĕмри шырав // Тăван Атăл. 1986. 3 №. 68–69 с.

[42] *Лукин А.* Шанчăклă утăм // Ялав. 1986. 11 №. 23 с.

[43] *Чекушкин В.* Хăй сасси, хăй кăмăлĕ // Тăван Атăл. 1990. 11 №. 50–52 с.

[44] *Волгин И.* За что побили Смердякова // Лит. обозрение. 1979. № 6. С. 50.

[45] *Родионов В.Г.* Вăхăт тивĕçĕ // Тăван Атăл. 1988. 4 №. 50 с.

[46] *Артемьев Ю.* Хумханать сар тулă çил çинче // Тăван Атăл. 1983. 2 №. 67 с.

[47] *Хусанкай А.П.* Указ. соч. С. 39.

[48] *Родионов В.Г.* Геннадий Айхи тата 50–70-мĕш çулсенчи чăваш поэзийĕн форма шыравĕсем // Хыпар. 1997. Çу, 15.

[49] Çавăнтах.

[50] *Хусанкай А.* «Тăнлав сунталĕ çинче сăмахăма туптать шăплăх...» // Тăван Атăл. 2003. 8 №. 1 с.

[51] *Дмитриев И.* Кунти тавралăха хура тухатмăшсем тухатнă: (çавра сĕтел) // Хыпар. 1991. Юпа, 23.

[52] *Хусанкай А.* Кунти тавралăха хура тухатмăшсем тухатнă: (çавра сĕтел) // Çавăнтах.

[53] *Федоров Г.И.* Художественный мир чувашской прозы 1950–1990-х годов: монография // Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 1996. С. 154.

[54] *Тимаков В.* Çепĕçлĕх кĕввисем // Ялав. 1983. 3 №. 26 с.

[55] *Яковлев Ю.В.* «Эп юрă мар, пĕр çаврăм çеç...»: çавра сĕтел // Хыпар. 1991. Чӳк, 20.

[56] *Хусанкай А.П.* Поиск слова: литературно-критические статьи. С. 88.

[57] *Артемьев Ю.* «Кам каларĕ эп пĕччен тесе?» // Хыпар. 2011. Ака, 20.

[58] Çавăнтах.

[59] *Родионов В.Г.* Национальный тип мышления // Известия НАНИ. 2000. № 1. С. 22.

[60] *Волков Г. Н.* Мудрость народная // Советская Чувашия. 1996. Февр., 2.

[61] *Яковлев И.Я.* Моя жизнь. М.: Республика, 1997. С. 65.

[62] Комиссаров Г.И. – краевед и просветитель / сост. *А.А. Кондратьев.* Уфа: Изд-во ТГТ. 1999. С. 402

[63] *Родионов В.Г.* Национальный тип мышления. С. 21.

[64] *Воробьев А.* Пысăк ăсталăхшăн // Ялав. 1973. 9 №. 28 с.

[65] *Родионов В.Г.* Национальный тип мышления. С. 21.

## ТУПМАЛЛИ

Кӳртĕм ........................................................................................... 3

**I. ПОЭЗИЕ ТĔПЧЕС ЫЙТУ**
1.1. *Сăвă тишкерĕвĕн меслечĕсем* ........................................................ 4
1.2. *Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхне ăслăлăхра хак пани* ........................................................................................... 9

**II. ЧĂВАШ СĂВĂÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ**
2.1. *«Сукмакăм ман – тасалăх айĕнче»*
(1950–1960 çулсенчи сăвăри çĕнĕлĕхсем тата Петĕр Эйзин пултарулăхĕ) ........................................................................................... 16
2.2. *«Калла эп çаврăнса пăхатăп – Мĕн чухлĕ йышăнман сăмах!»*
(Любовь Мартьянова пултарулăх тĕнчи) ........................................ 20
2.3. *«Çăлтăрсен хĕлхемне çĕр çинче чĕртнĕскер»*
(Петĕр Яккусен сăввисенчи лирика геройĕ) ................................ 21
2.4. *«Çунать шап-шурă çутă...»* (Алексей Аттил тĕнчи) ................ 22
2.5. «*Клавишсем çийĕпе чĕлтĕртетрĕ / Чун таси*»
(Георгий Федоров лирики) ............................................................ 23
2.6. *«Хăçан та пулсан пайланать çак планета»*
(Михаил Сунтал сăввисенче пытараннă чун хăравĕ) .................... 25
2.7. *«Эп пулман кунта – ан макăр / Вăл та пурăннă тесе...»*
(Марина Карягина лирика героинин хăйне евĕрлĕхĕ) ................ 26
2.8. *«Чунра – йĕрӳ, хĕрхӳ, улах»*
(Надежда Сельверстровăн вăрттăн чун тĕнчи) ............................ 27

**III. ЛИРИКА ГЕРОЙĔСЕН СИНКЕРЛĔ ТĔНЧЕКУРĂМĔН ХĂШ-ПĔР СĂЛТАВĔСЕМ**
3.1. *Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнчи «чăвашла» (Тухăçла) тата Анăçла шухăш палăрăмĕсем* .................................... 29
3.2. «*Чикĕри тăрăм» тата сăнарсем хире-хирĕçле аталанни* ........... 32

Пĕтĕмлетӳ ........................................................................................... 33
Литература тата асăрхаттарусем .......................................................... 35

Научное издание

ИЛЬИНА Надежда Геннадьевна

# ЧУВАШСКАЯ ЛИРИКА
# (1960–1990-е годы):
# вопросы исследования стиха
# и стилевые поиски

Доклад научной сессии
Чувашского государственного института
гуманитарных наук
по итогам работы за 2011 год

Выпуск 8

*На чувашском яыке*

Научный редактор *Г.А. Николаев*
Литературный редактор *Т.Н. Таймасова*
Художественный редактор *А.А. Трофимов*
Корректор *Г.И. Алимасова*
Оригинал-макет *Л.Н. Сапоговой*

Подписано к печати 10.10.2012. Формат 60 × 84 $^1/_{16}$.
Печать оперативная. Бумага офсетная. Гарнитура Times.
Физ. печ. л. 2,5. Уч.-изд. л. 2,11. Тираж 70 экз.
Заказ № 27.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский пр., 29, корп. 1